чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

75 /26481/№ Кĕçнерни кун, 2014, ака (апрель), 24 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru


*Правительствăра*

# Мускав укçи республика аталанăвне тĕревлĕ

***Çак кунсенче Мускавра çĕр-шыв ертӳçисем ирттернĕ сумлă та пысăк пĕлтерĕшлĕ лару-канашлăва хутшăннă май республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ЧР Министрсен Кабинечĕн ĕнерхи ларăвне те тĕп хулара сӳтсе явнă темăсенчен, унти тĕл пулусенчен пуçларĕ. Çав тĕл пулусем Чăваш Ен аталанăвне, социаллă пурнăçпа экономика ыйтăвĕсене татса парассине тӳрремĕнех пырса тивеççĕ.***

Михаил Васильевич палăртнă тăрăх – республика экономикинче ырă туртăмсем пур, вăл ӳсĕм çулĕ çинче. Çынсен ĕç укçи те ӳсĕмлĕ – «111,5%, пĕлтĕрхинчен кая мар». Çав вăхăтрах ял хуçалăх сферинче йывăрлăхсăр мар. Иртнĕ çул çанталăк такăнтарнине кура М.Игнатьев кăçал агропромышленноç комплексĕ енĕпе уйрăмах çине тăрса ĕçлемеллине палăртрĕ: «Хавшак хуçалăхсемпе кирлĕ ĕç пурнăçламалла, вĕсене ăнăçлă ĕçлекеннисемпе пĕрлештермелле. Ял хуçалăхĕ валли укçа уйăрнă – усă пулмалла». Бюджет сферин ĕçченĕсем шалу ӳсĕмне туйни куç кĕрет. Çав вăхăтрах, ЧР Пуçлăхĕн шухăшĕпе, тупăш пысăкланнине кура хăшĕсем килти хушма хуçалăха тытса пырассине пăрахаççĕ, апла тăк ĕçлес кăмăллă çынсене тупма тăрăшмалла.

Ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче Владимир Путин Президент РФ Патшалăх Канашĕн тата Наци проекчĕсене пурнăçлас енĕпе ĕçлекен канашăн пĕрлехи ларăвне ирттернĕ, унта шăпах ял территорийĕсене аталантарас ыйтăва тишкернĕ. М.Игнатьев ялшăн социаллă сфера, ял хуçалăх производствин тата пĕчĕк бизнеса аталантарассин çул-йĕрĕсем тĕп вырăнта пулмалли çинчен каларĕ. Çак тĕллевпе 138 млн тенкĕ уйăраççĕ – «çав укçапа мĕнле усă курнине тимлĕ сăнаса тăмалла». Унччен ялта тĕпленекен çамрăксене кăна çурт-йĕр çавăрма кирлĕ укçан 70% таран парса пулăшнă, малашне çак çăмăллăхпа ыттисем те усă курма пултараççĕ. Нихăш сферăра та çакнашкал тĕрев çук, апла тăк унпа май пур таран усă курма тăрăшмалла.

Мускаври тĕл пулусенче ача сачĕсен строительствин ыйтăвĕсене те сӳтсе явнă. Раççей Правительстви çакăн валли пĕтĕмпе 40 млрд тенкĕ уйăрма йышăннă. Чăваш Ен те пысăк укçа илет, 4,8 пин ытла ача валли садиксенче вырăнсем пулĕç. Иртнĕ çул усă курса ĕлкĕреймен укçана та параççĕ – ыйту татăлнă. Çапла вара федераци бюджетĕнчен пĕлтĕрхинчен ытларах укçа илĕпĕр.

«Пĕрлĕхлĕ Раççей» парти проекчĕсене пурнăçлама 20 млн тенкĕ пулать – çак укçапа шкулсен 25 спортзалне юсаса çĕнетмелле. Культура министрĕпе Чăваш автономийĕн тата Шупашкар юбилейĕсене хатĕрленсе ирттерес ыйтусемпе калаçнă. Культура валли 1,5 млрд тенкĕ уйăрмалла – пĕлтĕрхинчен 11% нумайрах. Унччен ялсенчи культура çурчĕсем валли Мускав укçа паман, кăçал федераци бюджетĕнчен укçа килмелле – 27 объекта юсама çитмелле. Тата 10 млн тенкĕ – куçса çӳрекен клубсем туянма, кустăрмаллă 4 клуб пулĕ. 55 млн тенкĕ – культура еткерне упраса хăвармалли мероприятисем валли. Çав шутра Шупашкарти Введени соборне, Çĕрпӳри Тихвин мăнастирне юсама укçа пулĕ.

Çавăн пекех спорт объекчĕсен строительствине те Мускав укçапа тĕревлĕ. Михаил Васильевич «Чăваш Ен спорт валли нихăçан та кун чухлĕ укçа илмен» тесех каларĕ. Çавна май Вăрнарти футбол уйне те туса пĕтермелле – «хамăрăн лайăх футбол команди пулмаллах». Çынсене юхăннă çуртсенчен куçарма та укça уйăраççĕ. Кăçал 3,9 пине яхăн çынна çĕнĕ хваттерсене куçармалли, çуллен 48 пин м² çурт-йĕр хута ямалли пирки каланă май М.Игнатьев хăш-пĕр муниципалитет ку енĕпе халĕ те контрактсем туманнине аса илтерчĕ, ку ĕçе вăраха яма юраманни пирки асăрхаттарчĕ.

Ларăвăн кун йĕрки çине куçнă май чи малтанах бюджет право хутшăнăвĕсене йĕркелесси çинчен калакан саккуна улшăнусем кĕртессине татса пачĕç. ЧР Конкурентлă политика тата тарифсем енĕпе ĕçлекен патшалăх службин ертӳçи Альбина Егорова хăй ертсе пыракан тытăмăн 2011-2013 çулсенчи ĕçĕ çинчен отчет турĕ. Паллах, ЖКХпа çыхăннă ĕç тĕп вырăнта пулчĕ. Альбина Егоровна палăртнă тăрăх – кăçалхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен тӳлевсен индексĕ 106,9% пулмалла. Паллах, ку виçе мĕн пур муниципалитетшăн кăтартуллă пулмĕ. Вăл ЖКХ сферинче уйрăм инвесторсем ытларах пулмалли çинче пусăм турĕ. Инвесторсен тăкакĕсене саплаштармалли йĕрке пуррине кура вĕсемшĕн çул усă теме юрать.

2016 çултан тарифсене çулталăклăха мар, вăрахлăха палăртма пуçламалла. Тарифсен виçи пирки каланă май Чăваш Енре вĕсене пĕчĕкрех шайра тытма тăрăшнине те палăртрĕ. Пĕлтĕр, сăмахран, электричество сечĕсемпе технологи енĕпе çыхăнмалли тарифсене палăрмаллах чакарнă. Электроэнергишĕн тӳлесси – регионта чи пĕчĕккисен шутĕнче. Вĕри шывшăн та округра чи сахал тӳлетпĕр.

Патшалăх саккасĕсене вырнаçтарассине лайăх йĕркелени укçа чылай перекетлеме пулăшнă. Анчах служба ертӳçи хăш-пĕр чух аукциона хутшăнакансем каварлашнине те пытармарĕ. Унашкал тĕслĕхсем пирки право хуралĕн органĕсене пĕлтернĕ май çавăн пек тĕслĕхсем палăрмаллах чакнă. Умри тĕллевсен шутĕнче Альбина Егоровна тӳрĕ кăмăллă конкуренцие çул парассине, коррупци саманчĕсене кăклассине, ĕç уççăнлăхне тивĕçтерессине асăнчĕ.

Ял çыннисене çурт-йĕрпе тивĕçтерес ыйтăва тепĕр хут та çĕклерĕç – вице-премьер – ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов федерацин ял территорийĕсен аталанăвне тивĕçтермелли программипе килĕшӳллĕн уйăракан укçана валеçес ыйтупа сăмах илчĕ. 2014 çул валли – 145 млн тенкĕ ытларах. Çурринчен кăшт ытларах пайĕ – федераци укçи, ытти – республика бюджетĕнчен. Çак укçа 205 çемьене çурт-йĕрлĕ тума май парĕ. Халĕччен муниципалитетсен те хăйсен тӳпине хывмалла пулнă, малашне ку тиев вĕсем çине лекмест.

М.Игнатьев укçа илнĕ çынсем ялтах ĕçлесе пурăннине тĕрĕслесе тăмаллине аса илтерчĕ. Укçа илеççĕ те Мускава тапаççĕ – унашкалли пулмалла мар. С.Павлов палăртнă тăрăх – килĕшӳсенче çынсен хуçалăхра е предприятире пилĕк çул ĕçлемеллине çирĕплетнĕ. Пĕр хуçалăхра ĕçленĕ хыççăн теприне куçнă тĕслĕхсем пур – унашкаллисене «йĕрлес» мар терĕç, пур пĕрех ялта ĕçлеççĕ вĕт. Тепĕр самант пирки те сăмах пулчĕ: Сĕнтĕрвăрри районĕнче асăннă программăпа укçа илмешкĕн пĕр çынна та тупайман-мĕн. Шухăша яракан тĕслĕх.

Сывлăх сыхлавне çĕнетмелли программăна пурнăçлани çинчен сывлăх сыхлавĕн министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Татьяна Богданова каласа пачĕ. Программа тĕллевĕ – çынсем вилессине чакарса демографи лару-тăрăвне лайăхлатасси. Курăмлă кăтартусем пур, эппин, медицинăна пысăк укçа хывни сая кайман. Шел те, сывлăх сыхлавĕнче кадрсен çителĕксĕрлĕхĕ çав-çавах сисĕнет. Çавăнпах çамрăксене тĕллевлĕ майпа вĕрентес çул çине тăнă. М.Игнатьев вара пĕтĕмĕшле практика врачĕсем пирки сăмах пуçарчĕ. «Вĕсем универсаллă специалистсем тетпĕр, апла тăк çынсене те хăйсенех сиплемелле. Мана вара çав врачсем чирлисене ытти сиплев учреждениине ăсатаççĕ, çынсене йышăнмасăрах йышăннă пек кăтартса çыраççĕ тесе калаççĕ. Ĕç укçи ӳснĕ май медпулăшу пахалăхĕ те ӳсмелле. Тухтăрсен пуçлăха çаврăнмалла мар – ку енĕпе пĕтĕмпех йĕркеллĕ теейместĕп. Пĕтĕмĕшле практика врачĕ иртен пуçласа каçчен мĕн тăвать – тĕрĕслемелле», – терĕ вăл. Шурă халатлисен ĕçĕнчи çитменлĕхсем пирки министрсене те калама ыйтрĕ те – лешсем шарламаннине кура сăмаха шӳте çаврĕ: «Сире черетсĕрех йышăнаççĕ пуль... Е больницăсене çӳреместĕр-и, пурте сывă-и?»

Сĕнтĕрвăрринчи 11, 28-мĕш профучилищĕсене пĕрлештерсе технологи техникумĕ туса хурас ыйту тавлаштармарĕ. Ку ĕçе оптимизаци программипе килĕшӳллĕн пурнăçлаççĕ, ĕçлекенсен шучĕ 20 çын ытларах чакмалла. М.Игнатьев тĕп хулари спорт объекчĕсен строительствипе пайăррăн кăсăкланчĕ. Спорт министрĕ Сергей Мельников кашни объектри ĕçсемпе паллаштарчĕ-ха, апла пулин те Михаил Васильевич çывăх вăхăтра вĕсене хăй кайса курас кăмăлли пирки каларĕ. Пăр кермен, Шупашкарти ФОКсем, ытти объект – пурне те вăхăтра хута ямалла.

Лару Министрсен Кабинечĕн маларах тунă хăш-пĕр йышăнăвне улшăнусем кĕртнипе вĕçленчĕ.

**Николай КОНОВАЛОВ**

*Транспорт*



Олег МАЛЬЦЕВ сăн ӳкерчĕкĕ

# Уяв, кану кунĕсенче – пĕр вакун ытларах

***Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче хула çум пуйăсĕпе Шупашкартан Канаша е каялла çӳрекен ас тăватех ĕнтĕ: кану кунĕсенче çирĕме яхăн вакун уйăрнă пулсан та халăх вĕсене кĕрсе шăнăçаймастчĕ. Эпĕ те дачăна çӳренĕ: тамбура лексен те хĕпĕртеттĕмĕр, пичкери пулă евĕр хĕсĕнеттĕмĕр. Хăюллисем вакун тăррине хăпаратчĕç. Хăйсем хăрушсăрлăх техникине пăхăнманнине аван пĕлнĕ, анчах мĕн тăвăн, пурин те палăртнă çĕре вăхăтра çитес килет. Вăл çулсенче организаци-предприятире вăй хуракан çĕр-çĕр çынна çĕр лаптăкĕ уйăрса панă. Вĕсем йышлăн тата кашни кану кунĕнчех çула тухатчĕç.***

Юлашки çулсенче вара хула çум пуйăсĕ хăшпĕр кунсенче пушăллах халтăртаттарать. Çынсем çул укçи хаклă, туса илнĕ çимĕç тăкака саплаштармасть тесе дачăсене çӳреме пăрахнă. Хакĕ чăнласах пысăк. Шупашкартан Канаша çитме 264 тенкĕ, çав вăхăтрах маршрутка 165 тенкĕпех илсе çитерет. Уйрăмлăхĕ 99 тенкĕ вĕт, пенсионерсемшĕн вара кашни пус шутра. Вăхăт та пуйăспа çул çинче икĕ хут ытларах иртет.

Камсем усă кураççĕ-ха чукун çул транспорчĕпе? Камсен ялĕ разъезд çывăхнерех вырнаçнă тата унта пуйăспа çеç çитме май пур /автобуспа е маршруткăпа кайсан та çуран темиçе çухрăм танккамалла/ – çавсем çӳреççĕ. Анчах унашкалли нумаях мар.

Хула çум чукун çул çыхăнăвне ЧР Министрсен Кабинечĕпе килĕшӳ туса «Содружество» АУО йĕркелет. Унăн гендиректорĕ Владимир Горохов ялсенчи халăх йышĕ юлашки 10-15 çулта самаях чакнине, çынсем çулленех çăмăл автомобиль нумай туяннине аса илчĕ. Пассажирсем сахал çӳренĕрен чукун çул транспорчĕ тăкак тӳснине, ăна республика бюджетĕнчен саплаштарнине пĕлтерчĕ.

Çу кунĕсем çывхараççĕ. Çавна май яла е дачăна каякан тупăнатех. Тариф, расписани енĕпе улшăнусем пулаççĕ-ши?

Шупашкарти чукун çул вокзалĕн пуçлăхĕ Людмила Нягина висĕм кун журналистсен ыйтăвĕсене хуравларĕ. 2012 çулта пассажир сахал пулнăран хула çум пуйăсĕ пĕр вакунпах çӳренĕ. Паллах, çынсен кăмăлне çакă яланах тивĕçтереймен. Çавăнпа пĕлтĕр те, кăçал та ахаль кунсенче икшер вакун парĕç. Уяв тата кану кунĕсенче тепре хушĕç. ЧР Министрсен Кабинечĕн 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 22-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе тарифа кашни 10 çухрăм кайнăшăн 24 тенкĕ çирĕплетнĕ.

Малтанлăха палăртнă тăрăх – пуйăс республика тĕп хулинчен ирхине 7 сехет те 12 минутра, каçхине 18 сехет те 20 минутра çула тухĕ. Канашран 3 сехет те 50 минутра тата 14 сехет те 40 минутра тапранĕ.

**Валентин ГРИГОРЬЕВ**

# Ыран хамăра тĕрĕслĕпĕр

***Ыран, Чăваш чĕлхи кунĕнче, пĕтĕм халăхпа пĕрле диктант çырăпăр. Хăйне евĕр акцие хутшăнма кăмăл тăвакансене Чăваш Республикин Вĕренӳ институтĕнче, И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче, Шупашкарти Н.В.Никольский ячĕллĕ педагогика колледжĕнче 13.00 сехет тĕлне кĕтеççĕ. Диктант çырмалли бланксем, аудиторисем, текст вулавçисем хатĕр.***

ЧППУра /асăннă проектăн протокол пайĕ çавăнта иртĕ/ пухăннă çынсен пĕр ушкăнĕ диктанта унăн авторĕ Марина Карягина вуланă май çырĕ. Тепĕр ушкăна вара текстпа Алиса Чайникова, «Чăваш пики – 2013» конкурс çĕнтерӳçи, паллаштарĕ. Чăваш халăх артистки Светлана Савельева, Виталий Сергеев артист та çак акцире «диктор рольне вылĕç».

Пĕтĕм чăваш диктантне аудиторие пымасăр çыракансен Чăваш наци радиовне е Тăван радиона тимлĕн итлеме тивĕ. Çӳлерех асăннă вăхăтра диктант текстне тӳрĕ эфирта вулĕç. Алăпа çырнă е компьютерпа наборланă текста вăраха ямасăр электрон почтин çак адресĕпе ярса памалла: total.dictant.2014@yandex.ru. Проектăн йĕркелӳ комитечĕ тĕрĕслекенсен шанчăклă десанчĕ хатĕррине пĕлтерчĕ. Сăмах май, ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче Вĕренӳ институтĕнче диктант çырма кăмăл тăвакансем валли консультаци йĕркеленĕ. Çавăн чухне хăйсен пĕлĕвне тĕрĕслесе пăхакансем те пулнă. Вĕсен йăнăшĕсене вырăнтах тишкернĕ.

Сас-хура тăрăх – кăçалхи акцие РФ Патшалăх Думин депутачĕ Алена Аршинова хутшăнма кăмăл тунă. Чăваш чĕлхине тăрăшсах вĕренекенскер хăйĕн пĕлĕвне пĕрлехи проектра та тĕрĕслеме тĕллевленет-мĕн.

**Ирина ПУШКИНА**

## Спорта аталантарма

***Дмитрий Медведев премьер-министр регионсенче спорт çурт-йĕрне хăпартма субъектсен хыснинчен уйăракан укçа çумне çĕр-шыв бюджетĕнчен те куçарасси çинчен хушу кăларнă.***

Федерацин «Раççей Федерацийĕн физкультурипе спортне 2006-2015 çулсенче аталантарасси» программипе килĕшӳллĕн регионсен харпăрлăхне илекен спорт объекчĕсене тума кăçал федераци хыснинчен 4,9 млрд тенкĕ параççĕ. Субсиди калăпăшне Раççей Спорт министерстви палăртнă лимитсене тĕпе хурса, субъектсем хăйсен бюджетне еплерех тивĕçтернине шута илсе палăртнă. 52 регионран чи пысăк пулăшу илекеннисем – Чăваш Ен /334,5 млн тенкĕ/, Тамбов облаçĕ /330 млн/, Карачай-Черкес Республики /220 млн/.

Ку укçана субъектсенче спортăн 114 объектне, вăл шутра нумай тĕллевлĕ 23 комплекс, 30 зал, 9 бассейн, 15 пăр кермен, тикĕс 14 сооружени, ятарлă 23 хатĕр /велотрек, çуллахи йĕлтĕр çулĕ, велоçул/ тума усă курасшăн.

**С.СЕРЕГИН.**

КУН хыççăн КУН ☎ 56-04-26

## Акци старт илнĕ

***Вăрмар районĕнче «Çул çитмен ача» акци старт илнĕ. Унăн тĕллевĕ – шкул ачисене йĕркене пăсасран асăрхаттарасси, вĕренӳ учрежденийĕсен çул çитменнисемпе ĕçлекен комиссисен ĕçне тĕрĕслесси.***

Вунă кунра полици пайĕн сотрудникĕсемпе район администрацийĕн специалисчĕсем шкулсене çитĕç, право темипе лекцисемпе калаçусем ирттерĕç, йĕркене пăсакан ача-пăчан ашшĕ-амăшĕпе тĕл пулĕç тата ытти те. Çак кунсенче райадминистраци çумĕнчи çул çитменнисемпе ĕçлекен комиссин секретарĕ Людмила Павлова тата полици пайĕн инспекторĕ Снежанна Иванова Кивĕ Вăрмарти тата Мăнçырмари вăтам шкулсен вĕренекенĕсемпе тĕл пулнă, калаçусем ирттернĕ. Çавăн пекех Арапусри, Кивĕ Шулханри йывăрлăхра пурăнакан çемьесенче пулса курнă, вĕсене ашшĕ-амăшĕн тивĕçне чыслăн пурнăçламалли пирки асăрхаттарнă.

**Е.АНДРЕЕВ.**

## «Сăрнайсем» пултарулăхĕпе савăнтарнă

***Çĕнĕ Шупашкарти «Химик» культура керменĕнче «Сăрнай» вокал ансамблĕн концерчĕ пулнă. Пултарулăх ушкăнне ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, ЧР Композиторсен ассоциацийĕн членĕ Николай Эриванов ертсе пырать.***

Артистсем чăваш халăх тата чăваш композиторĕсен паллă юррисене те шăрантарнă. Çавăн пекех куракана Николай Эривановăн произведенийĕсене те парнеленĕ. Пухăннисем сăрнай, палнай каласа, тăм тата çăка шăхличсемпе шăхăртса, параппан çапса, шакăртмапа, шăнкăравпа шăнкăртаттарса чăвашсен авалхи ташă кĕввисене каланине тăвăллăн алă çупса йышăннă. «Сăрнайсем» чăвашлăх уявне Чăваш чĕлхи кунне халалланă.

**Р.ИВАНОВА.**

## Алина Прокопьева – марафон çĕнтерӳçи

***Çуллахи Универсиадăра икĕ кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ спортсменка Алина Прокопьева Японири Нагано хулинче иртнĕ пĕтĕм тĕнче марафонĕнче çĕнтернĕ.***



Тупăшăва пине яхăн спортсмен хутшăннă. Пирĕн ентеш Японири чи вăйлă марафонçăсене кая хăварса пĕрремĕш тухма пултарнă. Унăн вăхăчĕ – 2 сехет те 30,56 минут. 28 çулти атлетшăн ку питĕ пысăк çитĕнӳ. Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 3-мĕш спорт шкулĕнче РФ тава тивĕçлĕ тренерĕ Михаил Кузнецов патĕнче ăсталăха туптаканскер çак ăмăртура хăйĕн кăтартăвне çĕнетнĕ.

Наганори марафона 1999 çултанпа йĕркелеççĕ, унта планетăри чи сумлă спортсменсем вăй виçеççĕ. Çак тапхăрта унта Раççей атлечĕсем 10 хутчен çĕнтернĕ, Чăваш Ен марафонçисем те наградăсăр юлман. Пĕрремĕш ăмăртурах Олимп чемпионки Валентина Егорова çĕнтернĕ, 2005-2006 çулсенче – Альбина Майорова, 2009 çулта – Йĕпреç тăрăхĕнчи, халĕ Тольяттире пурăнакан Ирина Тимофеева, пĕлтĕр Наталья Пучкова мала тухнă.

**А.МИХАЙЛОВ.**


**Раççей почтин мĕн пур уйрăмĕнче *«Хыпара»* 744 тенкĕ те 12 пуспа, *«Хыпар-шăмат куна»* 321 тенкĕ 96 пуспа çырăнтараççĕ**

**«Хыпар», «Çамрăксен хаçачĕ»: электрон çырăнтару**



*2014 çулăн II çурри валли* **«Хыпара», «Çамрăксен хаçатне»** *электрон мелпе çырăнса илме пулать.*

*Çур çуллăх хак:* **«Хыпар» – 90 тенкĕ, «Çамрăксен хаçачĕ» – 50 тенкĕ.**

Тĕплĕнрех – www.hypar.ru сайтра

**СДАЕМ В АРЕНДУ**

АУ "Издательский дом "Хыпар" предоставляет в аренду помещения на 6 и 7 этажах здания редакционно-издательского корпуса, расположенного по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. И.Яковлева, д. 13, для использования под офис.

По всем вопросам обращаться в 616 каб. или звонить по тел. 8-967-478-06-12, 56-00-67.


**Çанталăк çинчен**

Паян пĕлĕтлĕ çанталăк, çумăр çăвать. Çил çурçĕртен çеккунтра 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 4 градус ăшă, çĕрле 2 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 752 мм, сывлăшри нӳрĕк 62 процент.

**Кун тăршшĕ 14 сехет те 52 минут.**

Ыран пĕлĕтлĕ çанталăк, вырăн-вырăн çумăр çăвать. Çил çурçĕр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 7 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 5 градус ăшă, çĕрле 1 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 746 мм, сывлăшри нӳрĕк 73 процент.

**Кун тăршшĕ 14 сехет те 57 минут.**

*Хӑтлӑ хваттер*

# Пӗрремӗш кварталта ҫурт-йӗр ытларах турӑмӑр

***«Хыпар» ыйтӑвӗсене республикӑн Министрсен Кабинечӗн Председателӗн ҫумӗ-строительство, архитектура тата ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх министрӗ Олег МАРКОВ хуравлать.***

**– Кӑҫал Чӑваш Енре пурӑнмалли вырӑн мӗн чухлӗ тумалла?**

– Пӗлтӗр ӑна 837,1 пин тӑваткал метр /висӗм ҫулхинчен 2,3% нумайрах/, ҫав шутра Шупашкарта 292,2 пин /13,5% ытларах/ тунӑ, – терӗ Олег Иванович. – Кашни ҫын пуҫне пурӑнмалли вырӑн /пирӗн – 0,67 тӑваткал метр/ ӗҫе кӗртес тӗлӗшпе республика федерацин Атӑлҫи округӗнче /0,50 тӑваткал метр/ Тутарстанпа Пушкӑртстанран иртсе малти вырӑна йышӑнчӗ.

2014 ҫулта республикӑн 857 пин тӑваткал метртан кая мар, иртнӗ ҫулхинчен 2,4% нумайрах хута ямалла. Тӗллеве пурнӑҫлас тӗлӗшпе кашни муниципалитет районӗпе хула округне план панӑ, министерство тата вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсен хушшинче килӗшӳ ҫирӗплетнӗ. Кӑҫалхи пӗрремӗш кварталта 56,8 пин тӑваткал метр, 2013 ҫулхи ҫав тапхӑртинчен 3,6% ытларах турӑмӑр.

**– Шупашкарти хӑш-пӗр ҫӗнӗ микрорайонти нумай хутлӑ ҫуртсене пурӑнма кӗрсен картишсене темиҫе ҫул хӑтлӑлатман пирки ҫынсен йӗпе-сапара пылчӑк ҫӑрма тивет. Кремечке /Гремячево/ микрорайонӗнче пурӑнмалли ҫуртсем тума палӑртнӑ. Строительство пуҫличчен инфратытӑм хывӗҫ-ши, ҫынсем пурӑнма тытӑниччен картише асфальт сарӗҫ-ши, хура тӑпра сапаланӑ хыҫҫӑн йывӑҫ-тӗм лартӗҫ-ши?**

– Атӑл хӗрринчи Гремячево ялне чылай ҫул каялла Шупашкара кӗртнине ҫынсем пӗлеҫҫӗ ӗнтӗ. Гремячево тӑкӑрлӑкӗпе юнашар тепӗр микрорайон ҫӗкленӗ. Ӑна хӑпартаканни – «Устра» общество. Тӗп хула администрацийӗ ҫирӗплетнӗ проектпа килӗшӳллӗн микрорайон 35,3 гектар йышӑнӗ, 341 пин тӑваткал метр хута ямалла. 7-16 хутлӑ ҫуртсем, 240-шер вырӑнлӑ икӗ ача сачӗ, 1200 вӗренекен валли шкул, часавай пулӗҫ. Шкул ҫулне ҫитиччен ачасене, физкультурӑпа туслисене, канакансене вырӑн уйӑрӗҫ, ҫуртӑн пӗрремӗш хучӗсене аптека, суту-илӳ, апатҫимӗҫ организацийӗсене парӗҫ. 640 ҫӑмӑл автомашина валли ҫӗр айӗнчи гараж, 300 вырӑнлӑ тӑватӑ хутлӑ паркинг /путвалӗ ҫӗр айӗнче/ тӑвасшӑн, автомашинӑсене ҫӗрле лартмалли лаптӑк уйӑрасшӑн. Микрорайона 2018 ҫулччен уҫмалла.

**– Иртнӗ ҫулсенче тӗп хулари Сад микрорайонӗнче /Б.Хмельницкий ур./ пурӑнмалли ҫуртсем кӑмпа пек ӳссе ларчӗҫ. Тул енчен – пурте пӗрешкел. Ҫӗнӗ микрорайонсене илӗртӳллӗрех архитектурӑпа хӑтлама май пур-и?**

– Сад микрорайонӗнчи сарлака панеллӗ пурӑнмалли ҫуртсем – ҫемье тупӑшне перекетлекен ҫемьесем валли. Чӑн та, тупӑш нумай илекен ҫынсем валли хӑпартакан ҫуртсенчен уйӑрӑлса тӑраҫҫӗ. Сад микрорайонӗнчи ҫуртсем пӗрешкел пулин те республикӑри тата Япониri палӑ архитекторсем вӗсене хӑйне евӗрлӗ шухӑш кӗртнине палӑртас килет. Микрорайон ӳссе ларичченунта садчӗ, ҫырла ҫитӗнтернӗ. Халӗ ҫуртсем ҫине пӑхатӑн та тӗрлӗ тӗслӗ ҫырла тӗмӗсене асӑрхатӑн.



Раҫҫей Президенчӗн «Раҫҫей Федерацийӗн гражданӗсене туянма май пур, пурӑнмалли хӑтлӑ вырӑнпа тивӗҫтересси, пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх пулӑшӑвӗн пахалӑхне ӳстересси ҫинчен» Указӗпе килӗшӳллӗн регионсемпе ҫуртсем тӑвакан организацисен умне ҫӗнӗ хваттер хакне йӳнетме тӗллев лартнӑ. Правительствӑн 2018 ҫулччен «хваттер нумайрах туса ӑна ҫемье тупӑшӗпе перекетлӗ усӑ куракансемшӗн 20% йӳнетмелле». Типлӑ проектсене ӗҫе кӗртсен ҫеҫ тӗллеве пурнӑҫлӑпӑр. Вӗсем ҫурт хӑпартакансен проект хатӗрлессипе, ӑна экспертиза витӗр кӑларассипе ҫыхӑннӑ тӑкакне пӗчӗклетме май параҫҫӗ.

**– Шупашкар хулине никӗсленӗренпе – 550, Чӑваш автономи облаҫне йӗркеленӗренпе 100 ҫул ҫитиччен тӗп хула сӑнӗ мӗнле улшӑнӗ?**

– Унччен пурнӑҫламалли ӗҫсене Раҫҫей Федерацийӗн Правительстви ҫирӗплетрӗ. Тӗп тӗллев – Шупашкарӑн Хӗрлӗ лапамӗпе, кӳлмекӗпе унӑн таврашне ҫӗнетесси. Хула администрацийӗ реконструкци концепцине хатӗрлеме Испани компанине шаннӑ. Хосе Асебильо архитектор проекчӗпе килӗшӳллӗн К.В.Иванов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх академи драма театрӗ умӗнчи лапама пысӑк улшӑну кӗртмелле: хӑтлӑлатмалла, театрӑн икӗ енне павильон, аякра культура-курав комплексӗ, сахал хутлӑ ҫуртсем тумалла. Кӳлмек тата каҫӑ ҫинчи вун-вун фонтан шӑрӑхра сывлӑша уҫӑлтарӗ. Хӑш-пӗр тӗлте автоҫула висӗ шайлӑ хывнӑран транспорт инфратытӑмӗ улшӑнӗ. Ҫӗнӗ тротуарсем тӑсма палӑртаҫҫӗ. Мускав кӗперне реконструкцилесе транспорта харӑсах ултӑ йӗрпе ҫӳремелле тӑвӗҫ, Чӑваш патшалӑх филармонине, Оперӑпа балет театрне, «Олимпийский» стадиона, электроаппаратура завочӗн пулнӑ больницӑн нумай тӗллевлӗ ҫуртне /Ленин проспекчӗ/, ытти ҫуртсене тӗпрен юсӗҫ, «Шупашкар: 500 ҫул» парка ҫӗнетӗҫ. Строительство, реконструкци, реставраци тӑвас тӗлӗшпе пурнӑҫламалли ӗҫсен планне республикӑри историпе культурӑн Шупашкарти, Улатӑрти, Куславккари, Ҫӗрпӳри, Пӑрачкав районӗнчи, ытти ҫӗрти 47 палӑкне кӗртнӗ.

**– Мускав кӗперӗ ҫумӗнчи «Одис-отель» стройки темиҫе ҫул хула варрине сӑнсӑрлатать. Ӑна хӑҫан та пулин вӗҫлӗҫ-ши?**

– Кӑҫалхи ака уйӑхӗн 3-мӗшӗнче «Одис-отель» обществӑран пӗлтернӗ тӑрӑх – «МДМ Банк» ҫыннисем Шупашкара килсе хӑна ҫурчӗн строительствине тӗплӗн тӗпченӗ. Уйрӑммӑн илсен объекта, проектӑн техника условине, ҫурт тума ирӗк паракан документацие тишкернӗ. Банк вӗсене тӗпе хурса ҫывӑх вӑхӑтра е строительствӑна тӑсмашкӑн обществӑна кредит уйӑрма, е унпа ҫыхӑнӑва татма йышӑнӗ. Вӑл иккӗмӗш варианта суйласа илсен туса пӗтермен объекта пӑстармашкӑн суда тавӑҫ тӑратма тивӗ.

**– Тӗп хулари Воробьев композиторсен урамӗнче нумай хутлӑ бизнес центрӗ уҫасшӑн. Ӑна туса пӗтерӗҫ-ши?**

– Хула влаҫӗ хӑй вӑхӑтӗнче унти икӗ хутлӑ, путваллӑ, ҫынсем пурӑнман ҫурта реконструкцилесе 6-7 хутлӑ администраци-офис комплексӗ хӑпартма ирӗк панӑ пулин те строительсен ячӗпе ыйту капланчӗ. Пулас ҫурт хула архитектурине ан пӑстӑр. Шупашкарӑн истори пайӗнче нумай хутлӑ объект туса лартассине хирӗҫлекен ҫынсен сӗнӗвне те шута илмелле.

**– Республика Пуҫлӑхӗ нумаях пулмасть сире Министрсен Кабинечӗн Председателӗн ҫумне лартрӗ. Унтанпа ӗҫ йӗркинче мӗн улшӑнчӗ?**

– Паллах, ӗҫ хушӑнчӗ, вӑхӑт сахалланчӗ. Ҫурт-йӗр строительстви, транспорт тата унӑн инфратытӑмне ӗҫлеттерес, пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх, топливо-энергетика комплексӗ, тариф, экологи, тавралӑха хӳтӗлессин политики, ытти енӗпе тивӗҫ хушӑнчӗ. Ҫак ыйтусем маншӑн ҫӗнӗ мар. Кирек мӗнле должноҫра вӑй хурсан та республика халӑхӗшӗн тӑрӑшас килет.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ** **калаҫнӑ**

*Ял пурнӑҫӗ*

# Сӗт хакне йӳнетес марччӗ

***Элӗк районӗнчи Мартынкасси ялӗнче 70 ытла ҫын пурӑнать. Ҫав шутра – 43 пенсионер, тӗрлӗ вырӑнта вӑй хураканни 10-ӑн, шкулта вӗренекен 8 ача, ытти килти хуҫалӑхра тӑрӑшать е ялйыша эрехле ӗҫлесе парать.***



Ҫамрӑксем шкул пӗтерсен ялтан тухса каяҫҫӗ, хулара пӗлӳ илнӗ хыҫҫӑн ашшӗ-амӑшӗн ҫуртӗнче пурӑнма таврӑнмаҫҫӗ. Мартынкассинче ял хуҫалӑх продукцийӗ туса илекен ӑнӑҫлӑ пӗр предприяти те ҫук. Хресчен-фермер хуҫалӑхӗсем ӳсӗм тӑваймаҫҫӗ. Ҫавӑнпа ҫынсене вырӑнта ӗҫе вырнаҫма ҫӑмӑл мар. 1990 ҫулсенче районти вун-вун хуҫалӑх, ҫав шутра пирӗн те, панкрута тухрӗ. Унтанпа 20 ҫул иртрӗ. Апла пулин те саланнисен вырӑнӗнче ҫӗнӗ предприяти сахал йӗркелерӗҫ. Совет тапхӑрӗнче колхозра хастар ӗҫленисем ытларах никӗслессе кӗтеҫҫӗ. Шел те, шаннӑ кайӑк йӑвара пулмарӗ. Ял хуҫалӑх пӗлтерӗшлӗ ҫӗре сухалакан ҫителӗксӗртен уя ҫум курӑк хуплать. Вӑй питти арҫынсем ҫӗр лаптӑкӗ ҫемьене тӑрантармалӑх, ачасене тумлантармалӑх, ҫурт-йӗре юсамалӑх, килти хуҫалӑх умӗнчи ытти ыйтӑва татса памалӑх тупӑш паманнине ӑнланса Раҫҫейӗн тӗрлӗ хулине шапаша ҫӳреҫҫӗ. Юрать-ха, ҫапла майлаштарса пурнӑҫа сыпӑнтарса пыраҫҫӗ. Тепӗр енчен, республикӑран пин-пин ҫын ӗҫлеме юта кайнинче ҫемйисемшӗн лайӑххи сахал. Патшалӑх ял-йыша ӗҫпе тивӗҫтерес тӗлӗшпе мӗн кирлине пурне те туманни куҫ кӗрет. Ҫакӑнпа пӗрлех вӑл ял хуҫалӑхне йӗркелемешкӗн тӗрлӗ предприяти никӗслеме хавхалантарать. Сӑмахран, пирӗн патран 20 ҫухрӑмри Исванкӑ ялӗнчи Леонид Петров 7-8 ҫул каялла килти хуҫалӑхсенчен сӗт пуҫтарма тытӑнчӗ. Куллен чылай яла ҫитет. Мартынкассине ирхи 6 сехетех пырать. Хальхи вӑхӑтра кашни литршӑн 17 тенкӗ тӳлет. Ҫулталӑк пуҫламӑшӗнче 22 тенкӗ паратчӗ. Килти хуҫалӑхра туса илекен продукци кашни эрнере тенӗ пекех йӳнелет. Иртнӗ ҫулла сутлӑх хак 10 тенкӗ юлчӗ. Ял ҫыннисем кӑҫал та ҫав шая ҫитиех анасран халех кулянаҫҫӗ.

Килти хуҫалӑхра ӗне усрасси – йывӑр ӗҫ. Ҫакна тирпейлекен предприятисен ертӳҫисем пӗлмеҫҫӗ-тӗр. Мӑшӑрпа иксӗмӗр нумай ҫул ӗне тытатпӑр. Ҫулла ӑна 13-14 сехет кӗтӳре ҫӳрететпӗр. Шӑрӑхра пиҫетпӗр, сивӗ ҫумӑр айне лекетпӗр. Ҫӑвӗпех утӑ хатӗрлетпӗр, улӑм, тырӑ янтӑлатпӑр – самаях тӑкакланатпӑр, пысӑк тупӑш илейместпӗр. Ҫав вӑхӑтрах тирпейлекен предприятисем, суту-илӳ организацийӗсем сӗтрен услам нумай тӑваҫҫӗ. Ҫак йӗрке шайлашуллӑ мар. Хресчене кӳрентерес марччӗ. Сутлӑх хака ҫулталӑк тӑршшӗпех пӗр шайра тытса тӑмалла. Продукцие йӳнетсен ҫынсен кӑмӑлӗ хуҫӑлӗ, нумайӑшӗ ӗне усрас шухӑша пуҫран кӑларса пӑрахӗ. Хамӑр ял ҫыннисемпе калаҫнӑ хыҫҫӑн ҫавнашкал пӗтӗмлетӳ турӑм.

Пирӗн тӑрӑхра сӗт паракан йышлӑ мар. Мартынкассинче – 12-ӗн, Шапкинра – 11-ӗн, Энехметре – 4-ӑн, Шор-Пайрашра – 6-ӑн. Куллен 20-25-шер килограмм продукци сутакан А.Андреева, А.Ящикова, В.Багров, Н.Михайлова, А.Степанова, В.Спиридонов тирпейлекен предприятисем хака тӗрӗс лартасса шанаҫҫӗ. Килти хуҫалӑхсене тӑкак кӑтартсан кӗтӳ кӑҫал татах чакма пултарать.

■ **Вениамин АРХИПОВ, ӗҫ ветеранӗ, вӑрҫӑ ачи**

## Йӳнӗ те, меллӗ те

Тӑвай районӗн центрӗнчи нумай хутлӑ ҫуртсенче пурӑнакансем хваттерсене хӑйсем тӗллӗн хутса ӑшӑтас тытӑма куҫарсан тӳлев укҫи самаях чакасси ҫинчен вӑхӑтра ӑнланса илнӗ. 2011-2013 ҫулсенче нумай хваттерлӗ 39 ҫуртран ҫирӗм саккӑрӑшӗнче /70%/ вӗсем хӑйсен тӗллевне пурнӑҫланӑ.

Кӑҫал тата 10 ҫуртӑн хуҫисем ҫӗнӗлӗхпе килӗшнине пӗлтернӗ. Килҫурта хутса ӑшӑтас е газа вӑхӑтлӑха сӳнтерес килет – хӑвӑн ирӗк. Ӑшӑ котельнӑйран килнӗ чухне ӑна чылай чухне урама хӑвалатпӑр кӑна. Халӗ вара хутмалли пурлӑха та, кӗмӗле те чылай перекетлетӗн.

Ку таранччен Тӑвайӗнчи 6 ҫурт ҫывӑхне газ пӑрӑхӗсем хывнӑ. Ленин проспектӗнчи 46 ҫурт хваттерӗсенче газ оборудованине вырнаҫтараҫҫӗ. Строительствӑра укҫа-тенкӗ енчен чӑрмав ҫук, мӗншӗн тесен кил-ҫурт хуҫисем пурте ҫӗнӗ хӑтлӑхшӑн.

**В.ГРИГОРЬЕВ.**

## Приставсем ярмӑрккана кайнӑ

Приставсем парӑмсене шыраса илес тӗллевпе черетлӗ рейд ирттернӗ. Ку хутӗнче – Шупашкарти «Ярмӑркка» пасарта.

Хальхинче те хӑйсене лайӑх енчен кӑтартнӑ, куҫарса ҫӳремелли ятарлӑ хатӗрпе усӑ курнӑ. Унпа автомобилӗн регистраци номерне тӗллетӗн те – компьютер экранӗ ҫине тӳрех машина хуҫин кӑтартӑвӗсем, унӑн парӑм пуррисуккине ҫирӗплетекен информаци тухать.

Ултӑ автомобиле арестленӗ. Вӗсенчен виҫҫӗшӗн хуҫисем штрафсене, пӗтӗмпе 50 пин тенке яхӑн, вырӑнтах тӳленӗ. Тата виҫӗ машинӑна ятарлӑ автостоянкӑна илсе кайса упрамашкӑн лартма тивнӗ.

Иртнӗ эрне вӗҫӗнче вара суд приставӗсем ПАИ ӗҫченӗсемпе пӗрле тӗп хула ҫумӗнчи Хыркассинчи постра рейд ирттернӗччӗ. Ун чух 370 пин тенкӗ парӑма шыраса илнӗ. Штрафсене вӑхӑтра тӳлеменнисен 12 автомобильне арестленӗ.

**К.НИКОЛАЕВ.**

*Ӗҫмелли шыв*

# Типпе юлсан ҫӑл куҫ ҫӑлать



***● Шоркка ҫӑлӗсенчен пӗри.***

***Пӑлхар-чӑвашсем республикӑн хальхи хутлӑхне килсе вырнаҫсан ялсене шыв ҫывӑхӗнче никӗсленӗ. Шупашкар районӗнчи Шоркка та Мӑн ҫӑл куҫ патӗнчен, В.Евгеньев пӳртӗнчен инҫе мар, пуҫланнӑ.***

1854 ҫулта ялта пӗр урам ҫеҫ пулнӑ. Картологсем ӑна /халӗ – Майӑн 1-мӗшӗн урамӗ/ ҫеҫ ӳкернӗ. Карттӑ ҫинче «Шорка-касы», «1-ое Икова» сӑмахсем пур. Вӑл вӑхӑтра яла чӑвашла Шорккакасси, вырӑсла 1-ое Икова тенӗ.

Мӑн ҫӑл куҫ хӑйӗн вӑйлӑ пусӑмӗпе таврара палӑрса тӑнӑ. Кӳршӗ ялсен пирӗнни пек тапман-тӑр: Шорккана пичкесемпе килнӗ. Ҫӑл куҫӑн ҫӗр айӗнчи пӗр ҫулӗ ватӑ ҫынсемпе инвалидсен ҫурчӗ тӗлӗнчен, тӗмерен, анаталла анать. Ҫынсем ҫӗре выртса хӑлхана тӑратсан сассине илтнӗ. Унӑн ҫӗр айӗнчи ҫулӗсем кунта пӗрлешеҫҫӗ. Шур сухалсем ҫӑл иксӗлме пултарать тенӗ. Сахалрах юхтӑр тесе ҫамрӑксем унӑн куҫӗ ҫине пысӑк лаптак чул хунӑ. Пур пӗр шыв палкасах юхнӑ. Пурнӑҫ кӑна мар, ҫӑл та улшӑнать иккен. Пӗррехинче ҫӗре выртса итлерӗм – ҫӗр айӗнчи шыв сас памарӗ. Ахӑртнех, пусӑм вӑйӗ самаях пӗчӗк.

Ялта колхоз йӗркелесен вунӑ ытла анлӑ валака пуҫӑн-вӗҫӗн сыпӑнтарса ҫырма урлӑ каҫарнӑ, кашнин айне икӗ тӗрев янӑ. Юлашкин пуҫӗ тӗлне ансӑр валакпа ҫыхӑннӑ темиҫе мӑн курите /тараса/ лартнӑ. Колхоз, ял-йыш выльӑхне шӑварнӑ, хӗрарӑмсем кӗпе-тумтир ухнӑ.

Шӑрӑхра Ворошилов урамӗ вӗҫӗнчи Тури картиш ҫӑлӗнчен те йӑтаҫҫӗ. Сарапакасси ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ пулнӑ Юрий Ильин пуҫарнипе пилӗк ҫул каялла унӑн ҫӗрӗшнӗ пурине кӑларса тимӗр-бетон пӑрӑх ячӗҫ, тавра карта тытрӗҫ. Ял тӑрӑхӗн хальхи пуҫлӑхӗ Павел Амурцев та ҫӑлсене пӑхса тӑрать. Сӑмахран, хӑйне ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхне суйласанах пӗрне тарӑн чавса тимӗр-бетон пӑрӑх хыврӗҫ. Халӗ пиллӗкӗш те юсавлӑ. Шӑрӑхра е ҫӗр айӗнчен шыв уҫласа башньӑна тултарма чарӑнсан – ҫӑлсем пур. «Звезда» колхоз шыв тултармалли ҫав хатӗре 1972 ҫулта ларттарчӗ. «Чӑвашмелиораци» колонна рабочийӗсем ҫӗре 90 метр пӑраларӗҫ. Мехпарка, ял-йыша шывпа тивӗҫтерчӗҫ. Чӑн та, тура пурӑнакансем патне вӑл сахалрах хӑпарать. Шӑрӑхра пахча ҫимӗҫ шӑварса башньӑна часах пушатаҫҫӗ. Ӑна тултарса ӗлкӗреймеҫҫӗ. Ирӗксӗрех ҫынсен ҫӑл патне чупма тивет.

Майӑн 1-мӗшӗн, Октябрь, Ворошилов урамӗсене 1981 ҫулта хывнӑ полиэтилен пӑрӑх /4200 м/, вун ҫичӗ колонка ял-йышшӑн паян – пӗтӗм инфратытӑм. «Вӑл юрӑхсӑра тухсан ҫырмаран кӑкшӑмпа шыв йӑтма тивӗ», – халех пӑшӑрханаҫҫӗ инвалидсем. «Ан кулянӑр-ха, – лӑплантаратӑп хӑш-пӗрне. – Типпе юлсан урамсенче ҫӑл чавтарӑпӑр». Вӑл ӗлӗк ялта 14 пулнӑ. 10-11 метр тарӑнӑшне алтнӑ, шӑтӑка юман пура янӑ. Башньӑран шыв пама тытӑнчӗҫ те – пурте кирлӗ мар пулса юлчӗҫ. Пирӗн умринчен ҫеҫ витре ярса шыв ӑсма пулать. Ӑна Елена Силина упӑшки Тимуш пичче тунӑ. 1985 ҫулта шӑтӑка тимӗр-бетон пӑрӑх ятӑмӑр, тулли витрене хӑпартмаллине майлаштартӑмӑр. Ял администрацийӗ ҫак ҫӑл тата колонкӑсем тавра пӗчӗк карта ҫавӑрттарса хӑтлӑлатрӗ. Кӗскен: шыв пур, нуши ҫук.

■ **Владислав ПЛАТОНОВ, инженер-механик**

*Сывлӑх сыхлавӗ*

# Пирус тӗтӗмӗ хакла ларӗ, кафере кӑна мар, чарӑнура та...



«Граждансен сывлӑхне табак тӗтӗмӗн тата ӑна туртнин юлашкийӗсен витӗмӗнчен сыхласси ҫинчен» саккун йышӑнни – Раҫҫейӗн цивилизациллӗ те сывӑ пуласлӑхӗшӗн тунӑ пӗлтерӗшлӗ утӑм. Тӗрӗссипе, йытӑ ҫимен апата ҫӑвара хыпакансем тӗлӗшпе лару-тӑру ырӑ еннелле улшӑнни сисӗнет ӗнтӗ. Ҫак ыйтӑва влаҫ органӗсем те, общественноҫ та тивӗҫлипе хакласҫӗ. Ӗҫ вырӑнӗнче, бюджет организацийӗсен, патшалӑх тата муниципалитет влаҫӗн органӗсен пӳлӗмӗсенче туртакансене кураймӑн ӗнтӗ.

Ҫавӑнпа пӗрлех пирус мӑкӑрлантарнине хирӗҫлесе федераци саккунӗнче палӑртнӑ мерӑсем хальлӗхе хӑйсен эффективлӑхне кӑтартма ӗлкӗреймерӗҫ-ха. Чару мелӗсемпе пӗрлех социаллӑ рекламӑпа, табак туртнин сиенне уҫӑмлатассипе, халӑха пӗлтерессипе, медицинӑн туртассине сивлес тӗллевлӗ пулӑшӑвӗпе тивӗҫтерессипе, ҫул ҫитмен ҫамрӑксене пирус сутассине чикӗлессипе ҫыхӑннӑ программӑсем хатӗрлесе пур енлӗн кӗрешме тытӑнмалла.

Ҫӳлерех асӑннӑ саккунра палӑртнине пурнӑҫа кӗртмелли ыйтусене сӳтсе яврӗҫ регионсен хушшинчи семинара Чӑваш Ен тӗп хулине Мускав хулинчен, Мари Эл, Мордва, Тутарстан республикисенчен, Киров, Ульяновск облаҫӗсенчен пухӑннӑ хастарсем иртнӗ эрне кун. Ӑна Чӑваш Ен социаллӑ тата культура программисене пулӑшакан фонд пуҫарнипе йӗркеленӗ. Сывлӑх сыхлавӗн организацийӗсен, влаҫӑн ӗҫ тӑвакан органӗсен представителӗсем табака хирӗҫлекен саккуна ӗҫе кӗртес енӗпе пӗр-пӗрин опычӗпе паллашрӗҫ.

Ӗҫлӗ калаҫӑва уҫнӑ май Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн Председателӗн ҫумӗ – ЧР сывлӑх сыхлавӗпе социаллӑ аталану министрӗ Алла Самойлова табак туртни медицина ыйтӑвӗ кӑна маррине, вӑл социаллӑ сӗмлӗ пулнине палӑртрӗ. Сиенлӗ йӑлана пула пирус мӑкӑрлантаракансемсӗр пуҫне вӗсен тӗтӗмӗпе сывлакансем те нушаланаҫҫӗ вӗт. Тӗрӗссипе, кун пек чухне вӗсен сывлӑхӗ ытларах та хавшать. Раҫҫейре табак туртнипе чире кайса ҫуллен 300-500 пин ҫын пурнӑҫран вӑхӑтсӑр уйӑрӑлать. Вӑл бронхсене, чӗрепе юн тымарӗсене хавшатать, ӳпкен усал шыҫҫине пуҫарать.

Шел те, хальхи саманара пирус серепине ҫамрӑклах ҫакланакан йышлӑ. Ҫакна шута илсе унпа ҫитӗннисем хушшинче кӑна мар, ҫул ҫитменнисен йышӗнче те вирлӗн кӗрешмелле.

Ку енӗпе пирӗн хутлӑхра кӑтартуллӑ ӗҫленине палӑртмасӑр иртме ҫук. Чӑваш Ен – Раҫҫей Федерацийӗн табака хирӗҫ программине чи малтан пурнӑҫа кӗртме пикеннӗ регионсенчен пӗри. Сиенлӗ йӑлапа общество юхӑмӗ те пуҫаруллӑ кӗрешет, вӑл чару мелӗсемпе усӑ курнипе пӗрлех сывӑ пурнӑҫ йӗркине пропагандӑлассине тивӗҫлипе хаклать.

Пируса Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗн Администрацийӗн коллективӗ чи малтан сивлерӗ. Сӑмах май, Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев туртмасть, пурнӑҫӑн пуҫаруллӑ йӗркине тытса пырать тата хӑйӗн тӗслӗхӗпе сиенлӗ йӑлапа ҫыхӑннӑ лару-тӑрӑва ырӑ еннелле улӑштарма май пуррине ҫирӗплетет.

Потребитель обществисен пӗтӗм тӗнчери конфедерацийӗн правленийӗн председателӗ, Раҫҫей Сывлӑх сыхлав министерстви ҫумӗнчи табак туртнипе кӗрешекен координаци канашӗн членӗ Дмитрий Янин ҫирӗплетнӗ тӑрӑх – 2014 ҫулхи ҫӗртме уйӑхӗн 1-мӗшӗнчен федераци саккунӗн табака хирӗҫле уйрӑмах эффективлӑ мерисем вӑй илеҫҫӗ: ресторансенче пуринче те туртмалли ятарлӑ зонӑсене пӗтереҫҫӗ. Пуйӑссенче те мӑкӑрлантарма май килмӗ, инҫете ҫӳрекеннисен техника тамбурӗ хальлӗхе туртмалли вырӑн шутланать тӑк ҫӗртме уйӑхӗн 1-мӗшӗнчен ҫапла тума юрамасть. Хӑна ҫурчӗсем те пирус тӗтӗмӗнчен ирӗклӗ хутлӑх пулса тӑрӗҫ.

«Федерацин «табак туртнине хирӗҫле» саккунӗ хӑйсен прависемпе ирӗклӗхне чикӗлет тесе шухӑшлакансен ҫакна асра тытмалла: алкоголь тата пирус – ирӗклӗх мар, пӑхӑнса пурӑнни кӑна, – палӑртрӗ Дмитрий Дмитриевич. – Ҫак мерӑсене шухӑшласа тупакансем ӑссӑр ҫынсем мар. Туртакансен йышӗн 5-7 процентӗ вӗсем ҫине тӑнипе ҫуллен сиенлӗ йӑларан хӑтӑлма вӑй-хал тупать. Енчен те куллен пӗр курупка сигарет пӗтернӗ ҫын унӑн ҫурри йӗпех ҫырлахма хал ҫитерет тӗк пирусран уйӑлас шанӑҫ ун пеккин пысӑк, пурнӑҫӗ тата 10 ҫул ытларах тӑсӑласси те иккӗлентерместӗ».

Экспертсем палӑртнӑ тӑрӑх – табак туртакансем сывлӑх сыхлавӗн ахаль те ҫӑмӑл мар тиевне татах йывӑрлатаҫҫӗ. Пируспа туслӑ 44 млн ҫын медицина учрежденине лекмӗ тесе ҫирӗплетме камах пултартӑр. Вӑхӑт иртнӗ май унашкаллисене сиплевӗн пахалӑхлӑ пулӑшӑвӗпе тивӗҫтерме каякан тӑкак ӳссе пырӗ.

Никотин этем сывлӑхне майӗпен аркатать, вун пилӗк ҫул мӑкӑрлантарнӑ хыҫҫӑн тӗтӗм-сӗрӗм айнех лекме пулать. Раҫҫей халӑхӗ табак серепине йышлӑн ҫакланнӑ самантран шутлама тытӑнас тӑк 2020 ҫул тӗлне ҫӗр-шывӑн туртакан пӗр миллион ҫынна харӑсах сиплеме тивӗ.

Аслӑ Британире табак кӳрекен сиене тӗплӗн шутланӑ, ҫавна май мӑкӑрлантараканӑн медицина страховки туртман ҫыннӑннипе танлаштарсан хакла ларать, пенсийӗ валли вара сахалрах пухма тивет, мӗншӗн тесен ҫав укҫана тӳлемелли тапхӑр уншӑн кӗскерех – тивӗҫлӗ канура вӑл 20 ҫул пурӑнайӗ-и?

Хальхи вӑхӑтра виҫӗ ҫӗр-шывра – Беларуҫре, Казахстанра тата Раҫҫейре – сигарет курупкисене илӗртмӗшсемпе – инҫетри ҫул-ҫӳреве йыхравланипе, тӗрлӗ капӑрлатмӑш /тӗслӗхрен, страза/ вырнаҫтарнипе – илемлетме чарассишӗн кӗрешеҫҫӗ. Ҫакнашкал чӗркеме хӗр ачасене астарма ятарласа кӑлараҫҫӗ иккен.

Малашне сигарет курупкисем ҫинче табак сиенне сӑнлакан хӑрушӑ ӳкерчӗксем пулӗҫ.

Дмитрий Янин Чӑваш Республикинче пурӑнакан граждансен пирус тӗтӗмӗпе вараланман таса сывлӑшпа усӑ курмалли прави мӗнле пурнӑҫланнине полицин участокри инспекторӗсем тата Роспотребнадзор специалисчӗсем ҫирӗп тӗрӗслесе тӑрасса шаннине пӗлтерчӗ. «Нумай хваттерлӗ ҫуртсен подъезчӗсенче тӗтӗмсӗрӗм мӑкӑрланмӗ. Пуйӑссенче туртакан пулмӗ. Йӗркене пӑхӑнманнисене штраф тӳлеттерме тытӑнчӗҫ ӗнтӗ, апла тӑк полицейскисем протокола мӗнле йӗркелемеллине хӑнӑхаҫҫӗ. Эпир те таса сывлӑшпа тата паха сервиспа киленме тытӑнӑпӑр», – терӗ вӑл шухӑшне пӗтӗмлетсе.

ЧР Сывлӑх сыхлавӗпе социаллӑ аталану министерстви ҫумӗнчи табак туртнипе кӗрешекен координаци канашӗн ертӳҫин ҫумӗ, «Чӑваш Ен» фонд президенчӗ Михаил Федотов семинара хутшӑннисене «Чӑваш Ен – пирус тӗтӗмӗнчен ирӗклӗ хутлӑх» – табака хирӗҫле саккуна ӗҫе кӗртнине тата ӑна пурнӑҫланине Чӑваш Республикин тӗслӗхӗпе кӑтартса пани» социаллӑ пӗлтерӗшлӗ проектпа паллаштарчӗ.

Сӑмах май, федераци саккунӗ Раҫҫей субъекчӗсене халӑх йышлӑ ҫӳрекен ҫӗрте пирус туртассине чарас тӗлӗшпе хушма вырӑнсем палӑртмашкӑн пуҫласа ирӗк панӑ. Чӑваш Республикинчи хӗрарӑмсен общество организацийӗн председателӗ Ольга Зайцева ҫакӑнпа усӑ курса хамӑр хутлӑхри район-хулари общество транспорчӗн чарӑнӑвӗсенче пирус туртма чармашкӑн сӗнӳ пачӗ.

Семинара хутшӑннисем пӗр-пӗрин опычӗпе паллашнине тивӗҫлипе хакласа табакпа кӗрешес ыйтусемпе пӗрлехи сӗнӳсем хатӗрлеме, партнер хутшӑнӑвӗсене малалла тӑсса федерацин Атӑлҫи регионӗсен представителӗсен ӗҫлӗ тӗл пулӑвӗсене тӑтӑшах йӗркелеме калаҫса татӑлчӗҫ.

■ **Валентина СМИРНОВА**

*Уҫнӑ ҫерем*

# Аса илсен чун хурланать

Эпир, салтаксем, «Красноярск-Абакан» пуйӑспа Ачинск хулинчен ҫула тухрӑмӑр. Ир енне пӗр станцире 40 ҫынна антарса хӑварчӗҫ. Ужурска ҫитсен пурне те вакунран тухма хушрӗҫ. Апатланнӑ хыҫҫӑн автомашинӑсем икӗ еннелле хускалчӗҫ. 50 ҫухрӑм пек кайсан чарӑнтӑмӑр. Эпир совхоз кантурӗ умне ҫитнӗ иккен. Пире тӑваташарӑн уйӑрса уйрӑмсене ӑсатрӗҫ. Эпӗ тӑваттӑмӗшне лекрӗм.

Малтанах выльӑх апачӗ хатӗрлерӗмӗр, унтан трактор-комбайн юсарӑмӑр.

Кӗҫех пирӗн уйрӑма ял хуҫалӑха механизацилекен училищӗрен 30 ҫын ҫитрӗ. Красноярскран студентсене илсе килчӗҫ. Ҫапла тыр-пул пуҫтаракан йыш йӗркеленчӗ.

Хире 10 комбайнран тӑракан звено тухрӗ. Механизаторсем тулӑх ӳснӗ ҫурхи тулла пакуссене ҫулатчӗҫ, типсен ҫапса тӗшӗлетчӗҫ.

Хӗр-студенткӑсем ҫурма тӑраллӑ йӗтемре сортировкӑсемпе тырӑ тасататчӗҫ. Хирте те, йӗтемре те ӗҫ шавӗ самантлӑха лӑпланман. Ларса канма вӑхӑт пулманпа пӗрех.

Автомашина ҫитместчӗ. Ҫавӑнпа совхоз дирекцийӗ автобатальонран пулӑшу ыйтнӑ. Салтаксем уйран ҫӗрӗпех тырӑ турттарнӑ.

Ҫурла, авӑн уйӑхӗсем чиперех иртрӗҫ. Юпа уйӑхӗн вӗҫӗнче ҫанталӑк пӑсӑлчӗ. Чӳкре сивӗтрӗ, ҫумӑрпа хутӑш юр ҫума тапратрӗ. Йыш чакма тытӑнчӗ, студентсем Красноярска института вӗренме кайрӗҫ.

1959 ҫулхи чӳк уйӑхӗн 15-мӗшӗнче эпир те, салтаксем, ҫула пуҫтарӑнтӑмӑр.

Ҫулсем шӳсе ҫӑралма тытӑннӑ. Совхозӑн тӗп усадьбине аран ҫитсе ӳкрӗмӗр. Мӗн куртӑмӑр-ха? Складсем ҫитменрен ылтӑк пек тырра ҫара вырӑнтах купаланӑ. Вӑл ҫумӑрпа шӑтса кӗҫҫеленнӗ, сивӗпе шӑнса ларнӑ.

Элеваторсем, складсем, ҫулсем тумасӑр халӗччен усӑ курман ҫӗрсене мӗншӗн ҫав териех нумай лаптӑк таранччене сухаласа тырӑ ҫитӗнтермелле пулнӑ-ха?

Тар кӑларса, вӑй-хал хурса туса илнӗ сап-сарӑ «ылтӑна» пин-пин тонна таранах мӗншӗн сая ямаллаччӗ-ха? Тӳре-шарана пӗтӗмӗшле цифрӑсем ҫеҫ савӑнтарнӑ. Аса илетӗп те иртнӗ вӑхӑта – чун хурланать.

Ҫар комиссариатӗнче эпир мӗнле условире пурӑнни, ӗҫлени никама та кӑсӑклантармарӗ – таврӑнсан ыйтса пӗлекен тупӑнмарӗ.

■ **Александр ВИШНЕВСКИЙ**

# Çемьe

Ятарлă кăларăм

*Тĕслĕх*

# Телей маршручĕ: Барселона – Шупашкар



***– Нина, атя кĕнеке вулатпăр. Хăш страницăна çитнĕччĕ-ха эпир? – аллине чăваш букварĕ тытнă арçын пиллĕк тултарайман хĕр пĕрчийĕпе юнашар вырнаçса ларать.***

***Тăнăç çемьери кăмăллă çакнашкал ÿкерчĕкре тĕлĕнмелли нимех те çук пек. Чăваш сăмахĕсене пĕр-пĕрин çумне шăрçаласа çыпăçтаракан чиперукăн ашшĕ пирĕн тăрăхран маррине шута илмесен… Çулланнă арçын, пилĕк çул каялла чăвашла мар, вырăсла та пĕр сăмах та пĕлменскер, паян хăйĕн çемйинче виçĕ чĕлхе куллен янăранине çирĕплетет: каталон, вырăс тата чăваш чĕлхисем. Барселона хулинче çуралса ÿснĕ çын чăваш çĕрĕ çине мĕнле килсе лекнĕ? Чăвашсене сума сăвасси ăçтан пуçланнă? Кăсăклă вун-вун ыйту хуравне шыраса Ирина Стоменскаяпа Эктор Алос и Фонт çемйине хăнана кайрăм.***

### *Эсперанто çыхăнтарнă*

Шупашкар хулин варринче хăтлă хваттерте пурăнать виçĕ ăруран тăракан çемье. Асли – кил хуçи мăшăрĕн амăшĕ Августа Степановна, вырăс хĕрарăмĕ, тивĕçлĕ канура. Çемье йăпанăçĕсем – тăваттăри Нинăпа 10 уйăхри Николай /ячĕсем каталон чĕлхинче те, вырăслинче те пĕрешкелех илтĕнеççĕ/. Кил-йыш вучахĕн ăшшине упраканĕ – Ирина Станиславовна – И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ медицина факультетĕнчен вĕренсе тухнăранпа унтах клиника лабораторийĕн диагностикине вĕрентет, медицина ăслăлăхĕсен кандидачĕ. Хальлĕхе этемлĕхĕн черчен çуррин çĕр çинчи тĕп миссине пурнăçлать: пепкине пăхать. Унăн мăшăрĕ Эктор /хăйне çапла ятран чĕнни-каланине килĕштерет/ – социолог, Гуманитари ăслăлăхĕсен чăваш патшалăх институчĕн ĕçченĕ.

Çичĕ çул каялла пĕр çулпа утма тытăннă мăшăрăн çемье историйĕ кăсăклă.

– Барселонăри политехника университетĕнче программист спецальноçне алла илнĕ хыççăн 20 çул çак профессипе ĕçлерĕм. Пурăна киле иккĕмĕш аслă пĕлÿ илтĕм: тĕрлĕ чĕлхепе ачаранах кăсăкланнăран лингвист пулса тăма тĕв турăм. Чĕлхе тĕпчевçисĕн халĕччен пĕлмен чĕлхене вĕренесси – йĕркеллĕ пулăм. Çапла эсперанто вĕренме тиврĕ. 2005 çулта Чăваш Енре çак чĕлхене пĕлекенсен конгресĕ иртнĕччĕ, унта хутшăнма май килчĕ. Пулас мăшăрăм çав мероприятин йĕркелÿçисенчен пĕриччĕ, – вăрттăнлăха уçать çемье пуçĕ.

Тĕрĕссипе, лингвистика антропологине тарăннăн тĕпчекене Раççей ăнсăртран илĕртмен: регионсенчи сахал йышлă халăхсен шăпи кăсăклантарнă ăна. Эсперанто конгресĕ Чăваш Енпе паллашмалли сăлтав кăна пулнă эппин. Чăннипе вара вăл инçетри Каталони хăнишĕн пурнăçăн çĕнĕ страници пулса тăнă.

### *«Кипке», «чăмлак» мĕн тени?*

Иринăна эсперанто чĕлхине юлташĕсем вĕрентнĕ. Ача чухне ку е вăл сăмах тĕрлĕ чĕлхере мĕнле илтĕннине пĕлме тăрăшнă.

– Пĕр енчен, Экторпа пĕр пеклĕх чылай пирĕн. Çав вăхăтрах уйрăмлăхсем те пур – килĕшÿ çуратаканни çавă пуль. Вăл урăх халăх çынни пулни çемьере чăрмантармасть. Чăн та, малтанхи çулсенче пĕр-пĕрне ăнланман самантсем час-час сиксе тухатчĕç. Сăмахран, вырăсла пĕлменскере «памперс», «чăмлак», «кипке» сăмахсене мĕнле ăнлантарас? Вĕсемпе малтан ют чĕлхере усă курма тивменçке. Çапла хĕрĕм пирĕншĕн наукăра мал утăм тума хистекен чун та пулчĕ: ача-пăча терминĕсен виçĕ чĕлхе словарьне хатĕрлерĕмĕр, – кăмăллăн калаçать кил хуçи мăшăрĕ.

Сăмах май, мăшăр çинчен пĕр хушаматпа калама май çук: Испанире качча кайнă чухне хушамата улăштарас йăла çук иккен. Иринăпа Эктор вара Барселонăра çыраннă. Туй çинчен ыйтсан çамрăк хĕрарăм хăй «ыттисем пек мар» пулнине ĕнентерчĕ:

– Эпĕ чаплă кĕреке, хăнасен пысăк ушкăнĕ, шурă чĕлтĕрти кĕпе çинчен нихăçан та ĕмĕтленмен. Çырăнма пулас упăшкапа иксĕмĕрех кайрăмăр. Кайран тус-тăванĕсен пысăк мар ушкăнĕпе /6-7 çын/ кафере лартăмăр. «Клара» текен ĕçме ас тиврĕмĕр /сăрапа лимон сĕткенĕн, газ шывĕн хутăшĕ/. Асра юлни – Барселона урамĕсемпе иксĕмĕр уçăлса çÿрени.

– Эктор сире тăван çĕршывне илсе каяссишĕн çине тăмарĕ-им? – тĕпчетĕп малалла.

– Пытармалли çук: эпир çамрăкла пĕрлешмен. Кашниех карьера пусми тăрăх кармашма тытăннă. Хăшĕн те пулин çирĕп утăм тумаллаччĕ. Эктор манран хăюллăрах, теветкеллĕрех пулнине çирĕплетрĕ: 40-рен иртсен йăлт пăрахса ют çĕре тухса каясси çăмăл мар вĕт, – пурнăçра шанчăклă çулташа тĕл пулнине ĕнентереççĕ Иринăн сăмахĕсем.

Кил хуçи хăй мĕн шухăшлать-ха шăпи çакнашкал çаврăнса тухни пирки? Ÿкĕнмест-и Чăваш Ене килнĕшĕн?

– Ÿкĕнес пур – килмĕттĕм. Чăн та, Барселонăра хамăн иккĕмĕш профессипе те 20/!/ хут ытларах ĕçлесе илеттĕм. Хваттер пирки нимĕнле ыйту та çукчĕ. Анчах пурнăç тараси çинче пурлăх хаклăхĕсем пĕлтерĕшлĕрех-ши? Шупашкара килнĕренпе эпĕ кашни кун хамшăн çĕнни уçатăп. Тĕлĕнни, савăнни, пăшăрханни... – пурнăç çав тери интереслĕ! Кунта манпа кăсăкланаççĕ – çакă та, тунмастăп, хавхалану кÿрет. Акă журналист килех çитрĕ – эппин, манăн мĕншĕн кулянас? – шÿтлеме те ухата икĕ ача ашшĕ.

### *Кĕнекисене нимелле куçарнă*

Ăслăлăх чулне кăшлакансен – хăйсен тĕлĕнтермĕшĕсем. Акă Эктора илер. Хăй кăна Чăваш Ене куçса килни пулă çыран хĕрне тухса выртнипе танах пулĕччĕ. Унăн тупри – кĕнекесем. Ăслăлăх çыннишĕн – темрен паха «багаж». Раççей почти пĕр посылкăра 20 кг чухлĕ пурлăх çеç йышăнма пултарать. Çапла каталон ăсчахĕн библиотекин пĕр пайĕ – çур тонна кĕнеке – Шупашкарти хваттере çулталăка яхăн «куçнă». Эктор кĕнекисене почтăран ĕçтешĕсем, Иринăн тус-тăванĕ – кам кăна илмен пулĕ! Тулли стеллажсем çине пăхсан упăшкипе арăмĕ халĕ те йăл кулаççĕ – ниме тĕк ниме пулчĕ вĕт теççĕ.

Кĕнекисен хушшинче кулинари рецепчĕсен илемлĕ хулăн пуххине те асăрхарăм. Эппин, каталон-испан кухни те ют мар çемьешĕн?

– Шел, вырăс блюдисенчен вĕсен апачĕсем питĕ вăйлă уйрăлса тăраççĕ. Хатĕрлес тесен кирлĕ çимĕçсене пирĕн патăмăрта тупма йывăр, – каталонла калаçма вĕреннĕ кăна мар, культурине те ăша хывма тытăннă Ирина Станиславовна.

Культура тенĕрен, каталонсем уявсене кăмăллаççĕ иккен. Кашни хуларах хăйсен çветтуй хÿтĕлевçисене халалласа festa major текен уяв иртет. Ака уйăхĕн 23-мĕшĕ – пысăк прaçник – Кĕнекепе кĕлчечек кунĕ. Эктор ăнлантарнă тăрăх – Пуш уйăхĕн 8-мĕшне аса илтерет. Çав кун арçынна – кĕнеке, хĕрарăма кĕлчечек парнелесси йăлана кĕнĕ. Ку уява Испанире XV ĕмĕртенпех паллă тăваççĕ-мĕн.

### *Тăван сăмах тĕшши*

– Сирĕн ачăрсем çине пăхатăп та шухăшлатăп: «Хăйсем пирки мĕнле наци çыннисем тейĕç вĕсем çитĕнсен?

– Паллах, каталонсем. Эпĕ вĕсемпе çуралнăранпах çак чĕлхепе калаçатăп. Вырăсла та пĕлеççĕ, мĕншĕн тесен кунта пурте çак чĕлхепе калаçаççĕ. Вĕсене чăвашла калаçма та хăнăхтаратăп: республикăра – патшалăхăн икĕ чĕлхи, эппин, хăйсем пурăнакан вырăнти тĕп халăхăн чĕлхине вĕсен пĕлмеллех. Çакă кÿрше сума сăвассипе çыхăннă. Пурăна киле Тутарстана куçса кайма тÿр килĕ тейĕпĕр: сăмахсăрах тутарла вĕренĕпĕр. Чăннипе, ачана тĕрлĕ чĕлхене вĕрентесси пĕртте йывăр мар: вĕсемшĕн «политика» ăнлав ют, ку е вăл сăмаха тĕрлĕ чĕлхепе каласси шăпăрланшăн – вăйă кăна. Эпĕ те, сăмахран, садик ÿсĕмĕнченех испанла та, французла та пĕлнĕ. Каталон чĕлхипе ун чухне çемьере кăна калаçма юранă. Эпир телекуравра тăван чĕлхене илтеймен. Телее, 40 çула тăсăлнă чару – хыçра. Халĕ каталонсем хăйсен ирĕклĕхĕшĕн кар тăраççĕ, – чунне уçрĕ чăн-чăн полиглот.

Калаçу вăраха кайрĕ пулас: пĕчĕк Коля кăкăр ĕмнĕ май ыйхăламах тытăнчĕ. «Ырă каç, пĕчĕкскерĕм», – сунчĕ ашшĕ. Çак сăмаха Каталонирен пинпин çухрăмра йăхташĕсен чĕлхипе каласа хăйĕн тăхăмĕсене чăннипех хисепленине палăртрĕ. Мана вара ăсатнă чухне ырă чунлă çĕнĕ пĕлĕшĕм: «Чипер кайăр», – терĕ ăшшăн. Ăна кура пĕчĕк Нина та алăк умне çитсе тăчĕ: «Тата кил, аппа», – тесе чăвашла чĕвĕлтетрĕ.

■ **Ирина ПУШКИНА.**

Автор сăн ÿкерчĕкĕсем

*Кил ăшши*

# Ачана хÿтте илни – пархатарлă

***Пĕчĕк ачаран пысăк çын тăвас тесен ашшĕ-амăшне мĕн чухлĕ чăтăмлăх, вăй-хал кирлĕ. Ача урăх çемьере çуралнă пулсан, хăйĕн пурнăçĕнче çамрăклах ашшĕ-амăшĕ кÿрентернине тÿсме тивнĕ, лăпкăлăхпа çепĕçлĕхе туйман, йĕркеллĕ апат çисе курман тăк – мĕн тумалла? Ачан чĕрине мĕнле çемçетмелле, юратăвне мĕнле çĕнсе илмелле? Ача усрава илнĕ çынсем кашни кунах çакăн евĕр ыйтусемпе тĕл пулаççĕ, вĕсен хуравне куллен шыраççĕ.***



● *Надежда Николаевна Ярандайкина усрава илнĕ ачасемпе.*

...Тури Çĕрпÿкасси шкулне çитрĕмĕр. Кулленех 30 çухрăма хыçа хăварса Етĕрне районĕнчен çак шкула васкакан çамрăк директор Андрей Михайлович Иванов пире хапăл туса кĕтсе илчĕ. 17 ĕçченрен, 35 вĕренекенрен тăракан пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан тĕп шкул коллективне ертсе пырать вăл. Кунта ĕçлекенсенчен 35 проценчĕ пурнăçра йывăрлăха кĕрсе ÿкнĕ ачасене хăйсен хÿттине илнĕ. Тĕрлĕ вырăнти ачасене усрава тата опекăна илнипе шкулта вĕренекенсен хисепне ÿстернĕ.

Шкулта хуралçăра ĕçлекен Михаил Викентьевичпа Надежда Николаевна /килти хуçалăхра ĕçлет: выльăхсемпе аппаланать, сĕт сутма çÿрет/ Ярандайкинсен пĕтĕмпе сакăр ача. Тăваттăшне вĕсем пурнăç çулĕ çине кăларнă ĕнтĕ, вĕсем халĕ хăйсем çемьеллĕ, ашшĕ-амăшне мăнуксем парнелеме те ĕлкĕрнĕ. Ачасене юратакан ашшĕ-амăшĕн килĕнче халĕ тата тăватă ача çитĕнет. 7-мĕш класра вĕренекен Вадим Фомина Ярандайкинсем опекăна илнĕ, 6-мĕшпе 7-мĕш класа каякан пĕртăван Юльăпа Никита Васильевсене тата 1-мĕш класри Рома Петрова пĕчĕклех усрава илнĕ. Надежда Николаевна вĕсене чунтан юратать, май пур таран лайăх пăхма, тивĕçлĕ воспитани пама тăрăшать. Сывлăхĕсем çирĕп пулччăр тесе апат хатĕрленĕ чухне таса çимĕçпе усă кураççĕ. Ачисем те маттур, ашшĕ-амăшне мĕнпе те пулин савăнтарма васкаççĕ. Светлана Васильевна Мурайкина ертсе пыракан шкулти фольклор кружокне çÿреççĕ.

Елизавета Николаевна Иванова шкулта делопроизводительте нумай çул вăй хурать. Унăн та тăван ачисем çитĕннĕ. Ырă кăмăллă хĕрарăм 8-мĕш класра вĕренекен Владимир Субботиншăн чăн амăшĕ пекех, арçын ачашăн ăш пиллĕхне шеллемест, тивĕçлĕ воспитанипе тарăн пĕлÿ илсе, çемье ăшшине туйса ÿстĕр тесе тăрăшать.

Пĕлÿ çурчĕ çумĕнчи шкул çулне çитмен ачасен «Улыбка» ушкăнĕнче воспитатель пулăшуçинче ĕçлекен Альбина Георгиевна Иванова – нумай ачаллă амăшĕ. Мăшăрĕпе, Николай Петровичпа, пилĕк ачана пурнăç парнеленĕ. Колхоз арканиччен мăшăрĕ нумай çул трактористра вăй хунă, халĕ аякка ĕçлеме çÿрет. Ывăлĕсем виççĕшĕ те çĕр-шыв умĕнчи çар тивĕçне пурнăçланă. Халĕ ялта ĕç вырăнĕ çук пирки икĕ ывăлĕ ашшĕ çулне суйласа стройка ĕçĕпе аякка кайса нухрат тăваççĕ. Алексей электромеханика техникумĕнче, çарта пулнă хыççăн, вĕренĕвне малалла тăсать. Лена Шупашкарти кооперaци техникумĕнчен вĕренсе тухнă. Кĕçĕнни, Наташа, 5-мĕш класра вĕренет. Ивановсем ăна юлташа Настя ятлă хĕр пĕрчие усрава илнĕ. Иккĕшĕ пĕр класра вĕренеççĕ, туслă пурăнаççĕ. Настя вĕренÿре «5» паллăсемпе ĕлкĕрсе пырать. Икĕ хутлă хăтлă çуртра, тулли çемьере вăл хăйне пĕртте кичем туймасть. Ивановсен картиш тулли выльăх-чĕрлĕх: виçĕ ĕнепе виçĕ вăкăр, кроликсем... Кунта пурнăç вĕресе тăнине кура ача ĕçе хăнăхса ÿсет.

– ...Улатăрти ачасен çуртне ача пăхма кайнăччĕ эпир. Паллах, кучченеçсем те туллиех илнĕччĕ. Çавăн чухне Настьăна курсан чун хускалчĕ темелле. Амăшĕсĕр тунсăхланăскер чĕр куççи çинчен ниепле те анасшăн пулмарĕ. Вара эпĕ: «Пирĕнпе пыратăн-и?» – тесе ыйтрăм. Настя хирĕç маррине пĕлтерчĕ. Вăт çапла вара хамăрпа пĕрле илсе килтĕмĕр...», – аса илет халĕ Альбина Георгиевна.



● *Устиновсен çемйи.*

Ачасене 30 çул ытла вĕрентекен Алевтина Ильинична Скворцова, çавăн пекех кĕçĕн классене 15 çул ытла пĕлÿ çулĕпе ертсе пыракан Светлана Владимировна Лукина çемйисенче те пĕрер арçын ача çитĕнет. Николайпа Сергей шкулта тăрăшуллă, шкул директорĕ ертсе пыракан пăрахут кÿлеписене ăсталакансен кружокне çÿреççĕ.

Тури Çĕрпÿкассинчи Тамара Ивановнăпа Виктор Анатольевич Устиновсене ял-йышра сăпайлă, ĕçчен пулнипе пĕлеççĕ. Пултаруллă кил хуçи хресченпе фермер хуçалăхне йĕркелесе ярасшăн тăрмашать. Çакна валли вĕсен пĕтĕмпех пур темелле: ĕçлес кăмăлĕпе вăй-халĕ, выльăх-чĕрлĕхĕ... Мăшăр виçĕ ача çуратса ÿстернĕ. Иккĕшĕ халĕ аякра, кĕçĕнни шкула çÿрет. Ăна кичем ан пултăр тесе мăшăр сакăр çул каялла усрава ача илме шухăшланă. Анчах унăн пĕртăванĕсем, пиччĕшĕпе пĕчĕк йăмăкĕ, пуррине пĕлсен вĕсене те хăварман. Халĕ Устиновсен килĕнчен шкула тăваттăн çÿреççĕ. Ачасен кашнийĕн хăйĕн туртăмĕ пур: юрлама, сăвă çырма юратаççĕ, спортпа туслă.

Çакăн пек таса та ырă чунлă, сăпайлă та ĕçчен ашшĕ-амăшĕпе, маттур ачасемпе пуян Тури Çĕрпÿкасси ялĕ. Тĕрлĕ шăпаллă ачасене çунат айне пуçтарса, лăпкаса ÿстерсе пархатарлă ĕç тăваççĕ ку тăрăхри çынсем. Ырă туни ырăпа таврăнасса шанас килет.

■ **Альбина ЗАМУТКИНА.**

Хĕрлĕ Чутай районĕ.

Алина КАРПОВА сăн ÿкерчĕкĕсем

*Пуçару*

# Сăпка юррисене аса илнĕ

Çемье хушăнасса кĕтекен самант... Мĕн тери илĕртÿллĕ, асамлă вăл. Çавăн чухне пулас амăшĕн йĕри-тавра ырри, хитри, чуна хавхалантараканни кăна хуçаланмалла: пепкене çакă лайăх витĕм кÿрĕ.

Пулас амăшĕсене хÿтĕлес тĕллевпе Етĕрне районĕн тĕп больницин, ЗАГС уйрăмĕн ĕçченĕсем тата районти Хĕрарăмсен канашĕ хăйне евĕр пуçару тунă. Раççейре Культура çулталăкĕ пынине асра тытса «Сăпка юрри – ман пепке валли» конкурс йĕркеленĕ вĕсем.

Фольклор жанрĕн çак тĕсĕ халăхра ĕлĕкрех анлă сарăлнă. Компьютер технологийĕсем пуç пулса тăнă XXI ĕмĕрте ансат çак хайлавсене пурнăçран хĕссе кăларман-и эпир? Хамăрăн пĕчĕкскерĕмĕрсене юрласа çывăрттармалли сăмахсем пĕлетпĕр-и? Кĕввине чухлатпăр-и? Ырă йăла-йĕркене асра тытассине тĕпе хунă та асăннă конкурс йĕркелÿçисем.

Тĕрĕссипе, пуçарăвăн тĕллевĕ вăл çеç мар – халăха амăшлăх, ашшĕлĕх тата ачалăх ыйтăвĕсенче тимлĕрех пулма хăнăхтарасси, ачапа унăн ашшĕ-амăшĕн хутшăнăвне аталантарасси, ача воспитанийĕ тĕлĕшпе аслă ăруран опыт илесси. Сăпка юррисен конкурсĕ тĕрлĕ номинацире иртнĕ. Амăшĕн, ашшĕн, çемьен, авторăн, ачасен ушкăнĕн чи лайăх юррисене палăртнă вĕсенче.

– Акă Етĕрнери «Ладушки» ача-пăча фольклор ансамблĕн чиперккисем Глаша аппăшĕ патне «çĕнĕ кайăка курма» килнĕ. Чÿречерен шаккаççĕ, пепкене кăтартма ыйтаççĕ, сăпка юррипе савăнтарса хăвараççĕ. 5 ача ашшĕ В.Ильин пĕчĕк хĕр валли сăпка юрри шăрантарнине илтсен камăн чунĕ савăнмĕ? Е пĕртăван Васильевсен сассипе кам ан килентĕр? Чăн та, куракансем – пепке кĕтекен хĕрарăмсем, ашшĕ-амăшĕпе ачисем, асламăшĕ-кукамăшĕ, аслашшĕ-кукашшĕ – конкурсра кашнине тимлĕ итлерĕç-курчĕç. Ларутăру килти хăтлăха çывăх пултăр тесе тăрăшрăмăр: залра сăпка çакрăмăр, шушкă çакнă сăмавар вырнаçтартăмăр, урайне килте тĕртнĕ кавир сартăмăр, – каласа кăтартать пуш уйăхĕн вĕçĕнче иртнĕ конкурс çинчен ЗАГС уйрăмĕн ертÿçи Галина Яранская.

Етĕрне ял тăрăхĕн «Пилеш» фольклор ансамблĕ те çак мероприяти айккинче юлман. Унта çÿрекенсем тин çуралнă ачана ят хунин йăла-йĕркине кăтартса панă, «Нянине-чуччине» авалхи юрра шăрантарнă. Сăмах май, «Пилеш» асăннă хăтлавпа пĕтĕм тĕнчери «Талант çуначĕ çинче» проект картинче Хусанта иртнĕ фестивале хутшăннă, пĕрремĕш вырăна тухнă. Çу уйăхĕн пуçламăшĕнче Етĕрнесем фестиваль финалне Питĕр хулине çитĕç.

«Сăпка юрри – ман пепке валли» конкурс пуçласа иртни çинчен Мускавра та пĕлнĕ! Етĕрнене Пĕрремĕш телеканалтан шăнкăравланă. Кăларăм хатĕрлес тĕллевпе конкурса хутшăнакансене тепĕр хутчен пухма тивнĕ. Пурте хаваспах килсе çитнĕ.

Эппин, усал хыпар кăна мар, ырри те утпа çÿрет иккен...

■ **Влада МИРСКАЯ**



*Кĕске хыпарсем*

## Демографи лайăхланать-и?

Канаш районĕнче 2014 çулхи пĕрремĕш кварталта 111 пепке çуралнă. Çакă пĕлтĕрхи ку тапхăртипе танлаштарсан – 24 ача чухлĕ сахалрах.

Çулталăк вĕçлениччен – вăхăт самай-ха. Тен, ятсăр пÿрнине кăçал çĕрĕ тăхăннисем те çемьери пĕрремĕш «кайăкăн» сассине илтсе ĕлкĕрĕç. Иртнĕ виçĕ уйăхра Канаш тăрăхĕнче çĕнĕ 28 çемье тĕвĕленнĕ. Чăн та, пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен çамрăк мăшăрсен хисепĕ чакнă /10 çемье сахалрах/. Телее, уйрăлнă мăшăрсен йышĕ те пĕлтĕрхи 3 уйăхринчен сахалрах. Хут уйăрттаракансен йышне тĕпчесен акă мĕнле ÿкерчĕк тухса тăрать: çемье вучахĕ хавшас хăрушлăх 25-39 çулсенчи çынсен ытларах.

Район админстрацийĕн ЗАГС уйрăмĕн ĕçченĕсене юлашки вăхăтра вилекенсен шучĕ палăрмаллах ÿсни пăшăрхантарать: асăннă тапхăрта кунашкал содержаниллĕ актсем 153 пулнă /2013 çулăн пĕрремĕш кварталĕнче – 139/. Çуралнă ачасен йышĕпе пурнăçран кайнисен хисепĕ шайлашăнса тăмаççĕ те – демографири лару-тăру лайăхланни çинчен калаçма йывăр...

## Мĕнле ятсем модăра?

Кашни саманан – хăйĕн уйрăмлăхĕ. Çынсем çемьене çĕнĕ кайăк килсен ăна мĕнле ят парасси те вăхăт хăйне евĕрлĕхĕпе çыхăннă. Трактор, Авангард, Ревăпа Люция е çавăн йышши хăш-пĕр ят совет тапхăрĕшĕн килĕшÿллĕ пулнă тăк паян кăнттамрах илтĕнеççĕ пек. Хальхи вăхăтра Раççейре пурăнакансем славянсен ĕлĕкхи ячĕсене килĕштерни сисĕнет: Тарас, Архип, Матвей, Ярослава, Злата, Варвара, Давид т. ыт. те. Ют çĕр-шывсенчен килнĕ ятсем те сахал мар: Анжелика, Эмилия, Ника, Стелла...

Йĕпреç тăрăхĕнче 2000 çулта София ятпа пĕр ачана регистрациленĕ. 2013 çулта вара унăн аташĕсем ку тăрăхра 8-ăн çуралнă. Варвара ятлисем те йышланни сисĕнет: 2000 çулта – пĕр хĕр пĕрчине, пĕлтĕр вара районти 6 чиперука çак ята панă. Хальхи вăхăтра Йĕпреç енре Мария, Дарья, Таисия, Ульяна, Арина, Полина, Артем, Кирилл, Роман, Даниил, Никита ятсене кăмăллаççĕ. Унчченрех тĕнчене килнĕ çĕнĕ чуна йăла-йĕркене, нормăсене пăхăнса ку е вăл ятпа çыртарнă. Халĕ, психологсен шухăшĕпе, çынсенчен уйрăмрах пултарас туйăм е кунашкал пулăма вăйă пек хаклани малта.

■ **Анна КУПРИЯНОВА**

**Кăларăма Ирина ИВАНОВА хатĕрленĕ.**

## Сиплевçĕ

### Организмран тăвар кăларасси

200 грамм лимона çумалла, вĕрекен шыва самантлăха ямалла. Шывран кăларса типĕтмелле, теркăпа хырмалла /хуппипе пĕрле/. 200-шер грамм пылпа олива çăвĕ хушмалла. Лайăх пăтратса кĕленче савăта ямалла, сивĕтмĕше 10 кунлăха лартмалла. Кунне 3 хут апатчен çур сехет маларах 1-ер апат кашăкĕ ĕçмелле. Усă курма пуçличчен таса кашăкпа пăтратмалла. Сивĕтмĕшре упралла. Хутăша ĕçсе яриччене сипленмелле. Çур çултан тепĕр хут сиплев курсĕ ирттермелле.

● 250 грамм петрушка тымарне, 150 грамм петрушка çулçине, 250 грамм лимона хуппипех /вăррисĕр/ аш арманĕпе авăртмалла, 250 грамм пыл хушмалла. Ирхине тата каçхине апат хыççăн 1 сехетрен 1-ер чей кашăкĕ ĕçмелле. 3-4 сиплев курсĕ ирттермелле.

### «Симĕс çĕленпе» кĕрешетпĕр

Лимон кăштах ӳсĕрĕлсен лайăх пулăшать. Ăна ĕçкĕ-çикĕ умĕн çисен вăл алкоголĕн ӳсĕртекен витĕмне чакарать. Эрехсăра ĕçиччен тата ун хыççăн 1 стакан чей лимонпа ĕçни çителĕклĕ.

Алкогольпе наркăмăшланнипе хăсма пуçласан ӳсĕр çынна 1 стакан хура кофе лимонпа /сахăрсăр/ памалла, çамки çине сивĕ шывпа йĕпетнĕ салфетка хумалла. Сиенлĕ япаласене хăсса кăлармашкăн хура кофĕне тăвар ярса ĕçтермелле.

Мухмăр аптратсан 150-170 грамм апельсин сĕткенне чăх çăмарти /чĕрĕлле/ хушмалла. Лайăх пăтратса ĕçмелле. Темиçе сехетрен тепĕр стакан ĕçме юрать. Сĕрле кăштах эрех ăша янă пулсан ирхине выç варла пĕр апельсин çисен хăвăра лайăххах туйма пуçлатăр.

### Сыпă ыратсан

● Сыпă ыратсан час-часах мунчана çӳремелле.

● 2 апат кашăкĕ шăлан туратне /вĕтетсе/ вĕренĕ 1 стакан шыва ямалла, 5 минут вĕретмелле. Ун хыççăн ăшă япалапа чĕркемелле. 20 минутран сăрăхтармалла. Ревматизм чухне апатчен 20 минут маларах кунне 3 хутчен пĕрер стакан ĕçмелле.

● 1 стакан çурă шăлан тымарне вĕтетмелле, çур литр шурă эрехе темиçе кунлăха ямалла. Кунне 3 хут пĕрер апат кашăкĕ чейпе хутăштарса ĕçмелле.

● Ыратакан сыпăсене массаж тума, компресс хума кĕл чечек çăвĕ тата шĕвекĕ /настойки/ уйрăмах лайăх.

● Кĕл чечек çеçкине татса тĕттĕм тĕслĕ кĕленче савăта тултармалла, шурă эрех ямалла. Савăта çутă лекмен сулхăн вырăна 10 талăка лартмалла.

### Юн пусăмĕ çинчен мĕн пĕлмелле?

**120/80** – çак цифрăсем юн пусăмĕ питĕ лайăх пулни çинчен калаççĕ. Çӳлти цифрă ртуть юпин 100-130 мм танлашмалла. Çакăнтан пĕчĕкрех е пысăкрах пулни организм йĕркеллех ĕçлеменнине çирĕплетет.

**140 мм е ытларах.** Çӳлти юн пусăмĕ йывăр ĕçлесен е хытă пăлхансан ӳсме пултарать – çакă йĕркеллĕ темелле. Енчен те эсир юн пусăмне лăпкăн ларнă вăхăтра виçетĕр, çапах та цифра 140-рен ытла пулсан – чир аталанасран асăрханăр. Е чĕре питĕ хăвăрт тапать, е юн тымарĕсем сывах мар, çавна пула юн çаврăнăшĕ пăсăлать. Мĕн тумалла-ха? Юн пусăмне пĕрмаях виçмелле. Гипертони чирĕ аталансан тухтăр çырса панă эмелсене пурнăç тăршшĕпех ĕçмелле.

**90 мм е пĕчĕкрех.** Юн пусăмĕ организма шыв кирлинчен сахалрах пырса кĕрсен чакма пултарать. Юн çăралать, сахалланать. Чĕрене кирлĕ чухлĕ юн пымасть. Юн пусăмĕ чакнипе çын тăнне çухатма пултарать. Мĕн тумалла-ха? Çителĕклĕ таран – талăкра 2 литр – шыв ĕçмелле.

### Армути çăвĕ

Чечеке ларнă вăхăтра армути /полынь горькая/ пухма ан манăр. Ăна кĕленче савăта тултармалла, пусăрăнтармалла, ӳсен-тăран çăвĕ ярса çутă лекмен вырăна пĕр уйăхлăха лартмалла. Ун хыççăн шыв мунчинче 60 градуса çити вĕрилентермелле, сивĕнсен пăрса илмелле. Тĕттĕм симĕс тĕслĕ çу пулать. Ӳте амантсан, шăйăрттарсан, пĕçертсен, тута çине герпес тухсан çак çăва сĕрмелле. Питĕ лайăх пулăшать. Ыратнине ирттерет, пӳрленесрен сыхлать, сурана хăвăртах ӳт илме пулăшать.

Сунас чухне сăмса хăвăлĕсене çупа йĕпетнĕ мамăк чикме пулать.

Грипп анлă сарăлнă вăхăтра алăсене, янаха армути çăвĕ сĕрмелле – вирус çывăха пымĕ. Варикозран та сипленме пулать. Кунсăр пуçне армути çăвĕпе вăрăм туна çыртсан сипленме усă кураççĕ.

### Минерал шывĕ ĕçĕр

Сиплев вăхăчĕ пĕр уйăхран кая пулмалла мар.

Минерал шывĕсем апата ирĕлтерекен органсен, пӳре чирĕсенчен, япаласен ылмашăвĕ пăсăлсан сипленнĕ чухне пулăшаççĕ /боржоми, ессентуки, нарзан, «Саирме», «Джермук», «Арзни»/.

● Пĕвер чирĕсем канăççăрлантарсан кăштах газлă е газсăр шыва 40-45 градуса çити ăшăтса ирхине, кăнтăрла тата каçхине апатчен 1-ер стакан ĕçмелле.

● Вар-хырăм сĕткенĕн йӳçеклĕхĕ пысăк чухне минерал шывне апатчен 1-1,5 сехет маларах пысăк сыпкăмпа ĕçмелле; кăкăр хĕртсен е какăрттарсан – апат хыççăн 2-3 хут 50-шар мл. Вар-хырăм сĕткенĕн йӳçеклĕхĕ пĕчĕк чухне – апат вăхăтĕнче пĕчĕк сыпкăмсемпе.

● Холецистит чухне – «Арзни», «Березовская», боржоми, ессентуки-4, «Славянская» е «Смирновская».

### Компресс хурса

Ыратакан чĕркуççи çине компресс хума пулать. 1-ер апат кашăкĕ тăвар, апат соди, горчица çăнăхĕ тата пыл илсе хутăштармалла. Хутăша 2 салфетка çине вырнаçтармалла. Чĕркуççисене ӳсен-тăран çăвĕ сĕрмелле, компресс хумалла. Çиелтен полиэтиленпа витмелле, ăшă япалапа çыхмалла, утиялпа витĕнсе выртмалла. Ку компреса нумай вăхăт тытма юрамасть, аллерги пулма пултарать. Компреса илсен чĕркуççисене ăшă шывпа çумалла.

**Антонина ДОЛГОВА хатĕрленĕ.**

*Фестиваль*

# Çурхи вăй панă пуçару

***Чăваш патшалăх операпа балет театрĕн пуçарăвĕпе йĕркеленсе кайнă Пĕтĕм тĕнчери балет фестивалĕ çулран çул вăй илсе пырать. Кăçал вăл «вун саккăра» çитрĕ.***



Балет пирки калаçнă чух чун çĕкленет, çамрăкланать. Фестивале шăпах çак вăхăтра – çут çанталăк чĕрĕлнĕ самантра – йĕркелени те ахальтен мар пулĕ: хамăр миçе çулта пулнине пăхмасăр «çунат» хушатпăр, малалла ăнтăлатпăр, юрататпăр.

Кăçалхи фестиваль /вăл ака уйăхĕн 22-мĕшĕнче уçăлчĕ/ те çав ретренех. Балет искусствине юратакансене вăл пĕрремĕш кунах тĕлĕнмелле савăнăç парнелерĕ. Сцена çине Ф.Амировăн «Тысяча и одна ночь» спектаклĕ тухрĕ. Палăртса хăварар: асăннă ĕçĕн премьери Чăваш патшалăх операпа балет театрĕнче 1989 çулта иртнĕччĕ.

Хальхи вара... Пур енĕпе те малтанхинчен иртерет. Араб юмахĕсене тĕпе хурса лартнă спектакль пачах çĕнĕлле «пиçсе» тухнă. Çапла тума пулăшаканĕсем – Санкт-Петербург хăнисем. Вĕсем – хореографи тĕнчинче паллă балетмейстер Давид Авдыш тата çамрăк ӳнерçĕ Анна Устинова.

Ташă пирки сăмахпа каласа кăтартма йывăр, ăна курмалла. Çакна çеç палăртса хăварасшăн: икĕ сехете тăсăлнă премьера пĕр самантра, сывлăш çавăрса илнĕ тапхăрта иртсе кайрĕ тейĕн. Мĕн ачаран пĕлекен юмах çĕнĕрен тĕлĕнтерчĕ, хавхалану кӳчĕ. Ташă ăстисем пирки те çак сăмахсем. Тĕп партисене Чăваш халăх артисчĕсем Айдар Хисамутдинов /Шахрияр/, Татьяна Альпидовская /Джинн/ тата Анастасия Абрамова /Шахерезада/, Анна Серегина /Зубейда/, Дмитрий Поляков /Аладдин/ ташларĕç. Хĕвел тухăç кĕвви-çемми, капăр тум тата ытти те спектакле пуянлатрĕç. Чаршав хупăнсан та куравçăсем артистсене сцена çинчен ямарĕç, чылай вăхăт алă çупса тав турĕç.

Ĕнер вара сцена çине хăнасем – Мари патшалăх операпа балет театрĕн ташă ăстисем – тухрĕç. Кӳршĕсем А.Аданăн «Корсар» ĕçĕпе килнĕ. Ун пирки çакна каламалла: кашни театрах унашкал спектакльпе мухтанма пултараймасть. Артистсен ăсталăхĕ те, спектакле илемлетес пултарулăх та пысăккине уççăн çирĕплетет вăл. Тумсем тата... Аваллăх çӳпçинчен илнĕ тейĕн вĕсене.

Фестивале пирĕн ентешĕн Валентин Гладышевăн куравĕ те пуянлатать. Вăл, вунă çул ытла Çĕнĕ Зеландире пурăнаканскер, экспозицие Чăваш Енĕн хальхи вăхăтри балетне халалланă.

Ыран балет искусствине юратакансем П.Чайковскин вилĕмсĕр «Лебединое озеро» ĕçĕпе киленĕç. Тĕп партисенче Мускав ташă ăстисем пулĕç: Раççей халăх артистки, Пысăк театр солистки Мария Аллаш /Одетта тата Одиллия/, Раççей тава тивĕçлĕ артисчĕсем Игорь Колб, Илья Кузнецов.

■ **Надежда СМИРНОВА**

*Ахрăм*

# «Çырмалла пулман...»

«Хыпарăн» пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнчи номерĕнче эпĕ çырнă «Нуша хăвалать» статья кун çути курчĕ. Унта ентешсемпе пĕрле Мускав облаçĕнчи Чулково поселокне пахча çимĕç суйлама кайсан сиксе тухнă хăш-пĕр пăтăрмах пирки асăннăччĕ, Ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин специалисчĕ çакăн хыççăн çапла каларĕ: «Çырмалла пулман». Статьяна вуланисенчен хăшĕ-пĕри малашне инçе çула тухма иккĕленни каламасăрах паллă ĕнтĕ. Унашкал ыйтăва маларах та çĕкленĕччĕ-ха, çитменлĕхсене пайăррăн асăнманран-ши – шăл шурри кăтартакан пулманччĕ.

Саккăрмĕш класранпах хаçат-журналпа çыхăну тытма пуçланă май маншăн çакă çĕнĕлĕх мар. Чылай çул редакцисенче те «хурçă перопа хĕртнĕ» май хаçатçă ĕçĕ тепĕр чухне пархатарсăр пулнине те тӳсме тивнĕ.

1967 çулхи кĕркунне çар хĕсметне илчĕç. Чапаев ячĕллĕ е вăрçăсенче паттăрлăхпа палăрнă пĕр-пĕр дивизие лекме ĕмĕтленнĕччĕ. Анчах пире, Чăваш çĕр-шывĕнчи çирĕм ытла яша, Атăлçи тăрăхĕнчи Н-ски çар чаçне илсе çитерчĕç. Çамрăк салтак курсĕ хыççăн чылайăшне хурал батальонне, мана пропуск бюровне куçарчĕç. Çĕнĕ çул умĕн «Хĕрпе хурăн» лирикăлла тĕрленчĕк çыртăм та салтак тумĕ тăхăниччен хам ĕçленĕ район хаçачĕн редакцине ятăм. Виçĕ кунран штаб пуçлăхĕн çумĕ хăй патне чĕнтерчĕ.

– Редакцие мĕн çинчен çырнине вуласа пама тивет, – терĕ вăл.

– Унта çар вăрттăнлăхне асăнман, салтака каякан каччă хĕрĕпе хурăн айĕнче сыв пуллашни çинчен...

– Çапах та...

Мĕнех, чăвашларан вырăсла пĕр сăмах сиктермесĕр куçарса патăм. Каярахпа штаб пуçлăхĕ: «Ку корреспондента хамăр чаçе илмелле пулман», – тени хăлхана кĕчĕ. Тĕрĕссипе, икĕ çулта çар округĕн тата район хаçачĕсенче тăватăпилĕк заметкăран ытла пичетлеймерĕм те. Çӳлерехххине явапллă çын «Çырмалла пулман» тесе сăмахпа тĕртсе илнĕ хыççăн ятарласах хатĕрлерĕм. Алла ручка тытас умĕн вара ума В.Чертковăн 1977 çулта Мускаври «Юридическая литература» издательствăра тухнă «Авторское право» кĕнекине кăларса хутăм. Ăна ыттисене те вулама сĕнетĕп.

■ **Александр МОКИН.**
Шупашкар хули

# Етĕрнесем ача-пăча вăййисене тишкернĕ

***«Хăйне хисеплекен кирек мĕнле халăх та хăйĕн тăван чĕлхине пысăк пуянлăх вырăнне хурса хаклать, мĕншĕн тесен ăна вăл нумай ĕмĕр тăршшĕнче, тĕрлĕ йывăрлăх тӳссе, аталантарса, ӳстерсе пынă, хăй ăс-тăнĕпе кăмăлĕн уçси туса çитĕнтернĕ. Тăван чĕлхе пулăшнипе кашни çын мĕн ачаран хăй таврашĕнчи тĕнчине ăнкарса пурнăç пулăмĕсене ăнланма, ăс-хакăлне ӳстерме вĕренсе пырать. Этем тени тăван амăш, тăван халăх чĕлхисĕр йĕркеллĕ, пур енлĕ ӳсеймест», – тенĕ чăваш чĕлхеçи Михаил Сироткин.***

Етĕрнери 1-мĕш гимназире те республикăри чылай шкулти пекех Чăваш чĕлхи эрни иртет. Ăна вĕсем Чăваш чĕлхин кунне халалланă. Эрнелĕхре гимназистсем чăваш чĕлхин культурипе, йăли-йĕркипе тĕплĕнрех паллашаççĕ, чĕлхе аталанăвĕн çул-йĕрне тишкереççĕ, наци тумне пахалаççĕ. Ача-пăча вăййисене халалланă мероприяти те кăсăклă иртнĕ. Епле пулса кайнă-ха чăваш вăййисем? Тĕпчевçĕсем çирĕплетнĕ тăрăх – вăйăсен авалхи никĕсĕнче пурнăç опычĕ. Вĕсен содержанийĕнче халăх историне вулама пулать. Тĕслĕхрен: «Ухăпа пемелле», «Лашалла», «Патшалла», «Ĕмпӳлле» вăйă ячĕсенче халăх историйĕ «вуланать». 8-мĕш класра вĕренекенсем Н.И.Ашмарин словарĕнче çырса кăтартнă ача-пăча вăййисене тишкернĕ. Чăваш ачисен вăййисем хресчен пурнăçĕпе йăлине те сăнлаççĕ-мĕн. Шăпăрлансем ака тумалла, тырă вырмалла, кăшман кăлармалла выляççĕ. Гимназистсем вăйăсемпе паллашнă кăна мар, вĕсене выляса та пăхнă.

■ **А.ГРОМОВА**

# Канашра – «Туслăх кăшăлĕ»



***Канашри культура керменĕнче национальноçсен культурисен «Туслăх кăшăлĕ» фестиваль иртнĕ.***

«Ку фестиваль пире хулара пурăнакан тĕрлĕ халăх культурипе, йăли-йĕркипе паллашма май парать. Расна чечекрен çыхнă пуç кăшăлĕ калама çук илемлĕ. Çавăн пекех юнашар пурăнакан тĕрлĕ халăх та кашни хăйĕн культурипе, хăйне евĕрлĕхĕпе, хăйне манерлĕхĕпе пирĕн кулленхи пурнăçа пуянлатать», – палăртнă пултарулăх ушкăнĕсене саламланă май хула администрацийĕн культура, архив ĕçĕн тата национальноçсен ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ Наталия Золотова.

Куракансем вырăс, чăваш, тутар, украин, туркă, еврей, грек, китай халăхĕсен юррипе ташшипе паллашнă. Пухăннисем уйрăмах «Ассорти» ташă ушкăнне, «Юность», «Узоры», «Россияночка» ансамбльсене, Айтач Исмаиловăпа Айтач Алирзаевăн дуэтне тăваллăн алă çупса кĕтсе илнĕ. Асăннă проект питĕ интереслĕ, çавăнпа фестивале кăçал Тăвай тата Комсомольски районĕсенчи пултарулăх ушкăнĕсем те хутшăннă. Кашнинех дипломпа, Тав çырăвĕсемпе чысланă.

**Р.ИВАНОВА.**

*Спорт*

# Австрирен – кубоксемпе



***Çак кунсенче Австрири Инсбурк хулинче кикбоксинг енĕпе тĕнче кубокĕ иртнĕ. Йăлана кĕнĕ ăмăртура планетăри чи вăйлă та сумлă спортсменсем вăй виçнĕ. Унтан Чăваш Ен боксерĕсем тăватă медальпе таврăннă.***

91 килограмлисен ушкăнĕнче республикăри чи пултаруллă кикбоксер, ЧР кикбоксинг федерацийĕн ертӳçи, спортăн тĕнче класлă мастерĕ Алексей Соловьев çĕнтернĕ. Унăн юлташĕ 41-ри Алексей Кузнецов çăмăлрах виçере ылтăн медаль çĕнсе илнĕ. 17-18 çулсенчи каччăсен хушшинче Александр Потапов пьедесталăн иккĕмĕш картлашки çине хăпарнă. Чи çамрăк спортсменсен ушкăнĕнче Чăваш Ен чемпонки Елизавета Герасимова тупăшнă. 10-ри хĕр ача 28 килограмлă виçере виççĕмĕш вырăн йышăннă.

**А.ПЕТРОВ.**

# «Политех» парăнма хăнăхман

***Раççей студенчĕсен волейбол лигин пĕрремĕш дивизионĕн чемпионачĕ вĕçленнĕ. Ăмăрту Шупашкарти Олимп резервĕсен 9-мĕш спорт шкулĕн волейбол лапамĕнче иртнĕ.***



Тупăшăва Красноярск, Горно-Алтайск, Архангельск, Пенза, Калининград, Омск хулисенчи аслă шкулсенче вĕренекен яшсен командисем хутшăннă. Шупашкар чысне хулари политехника институчĕн студенчĕсем /тренерĕ – Павел Паршин/ хӳтĕленĕ. Пирĕннисем пĕрремĕш матчра «тăшманĕсене» 3:0 шутпа çĕнтернĕ, анчах тепĕр икĕ вăйăра çак шутпах выляса янă. Пур пĕр «Политех-ДСК» команда çурма финала тухнă, Омск волейболисчĕсене 3:0 шутпа парăнтарса пьедесталăн виççĕмĕш картлашки çине хăпарнă. Финалта Горно-Алтайсксемпе Красноярсксем вăй виçнĕ, çивĕч кĕрешӳ пĕтĕмлетĕвĕпе Алтай тăрăхĕн студенчĕсем чемпион кубокне тивĕçнĕ. Çапла вара мала тухнă виçĕ команда, çав йышра пирĕн ентешсем те, çĕнĕ сезонра Раççей студенчĕсен волейбол лигин аслă дивизионĕнче ăмăртĕç.

Çак кунсенче тепĕр хыпар пĕлтĕмĕр: Шупашкарти политехника институчĕн команди республикăри аслă шкулсен универсиадинче чемпион ятне çĕнсе илнĕ. «Политех» Чăваш Енри университетсемпе институтсен турнирĕнче виççĕмĕш çул пĕрремĕш вырăн йышăнать.

**О.МАСЛОВ.**

# Туçасем – чемпионсем



***Çак кунсенче шкул волейбол лигин чемпионачĕ вĕçленнĕ. Финал ăмăртăвĕсем Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 3-мĕш спорт шкулĕнче иртнĕ.***

Чемпионата республикăри вун-вун шкул команди хутшăннă, финалта 8 ушкăн вăй виçнĕ. Абсолютлă чемпион ятне Патăрьел районĕнчи Тури Туçа шкулĕн каччисем /тренерĕ – В.Козлов/ çĕнсе илнĕ, çавăн пекех вĕсем ял спортсменĕсен хушшинче пĕрремĕш пулнă. Юлашки матчра Туçасем хула командисен ушкăнĕнче çĕнтернĕ Шупашкарти 1-мĕш гимнази вĕренекенĕсемпе тĕл пулнă. Хĕрсен командисен йышĕнче Вăрнар районĕнчи Калинино салин тата Чăваш Ен тĕп хулинчи 1-мĕш гимнази пикисем мала тухнă. Çĕнтерӳçĕсемпе призерсене ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников, Çĕнĕ Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ, ЧР волейбол федерацийĕн ертӳçи Александр Сироткин тата ЧР Патшалăх канашĕн депутачĕ Юрий Кислов саламланă, тĕрлĕ парнепе чысланă.

**А.МИХАЙЛОВ.**

реклама пĕлтерӳ
Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

**ПРОДАЮ**

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**172.Гравмассу, керамблок,** песок, **щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ–54800, "Хыпар"-шăмат кун"–78353, "Çамрăксен хаçачĕ"–54804, "Чăваш хĕрарăмĕ"–11515, "Сывлăх"–11524, "Кил-çурт, хушма хуçалăх"–54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор–тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /явапл ă секретарь–техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор В.В.ГРИГОРЬЕВ

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: hypar1@mail.ru hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7512. Заказ 1475.